Пĕтĕм тĕнчери пролетарисем, пĕрлешĕр!

1938 ОКТЯБĔР 9
ВЫРСАРНИКУН
283(5046) №

Чăваш Коммунĕ

21-мĕш çул тухать

ПСК(б)П Чăваш Обкомĕпе Чăваш АССР Верховнăй Совечĕн хаçачĕ

Пĕр №-рĕ 10 пус

РЕДАКЦИ АДРЕСĔ: г. Шупашкар, ул. Володарского, 5. Дом Печати.

ТЕЛЕФОНСЕМ: редакторăн — 0—67, ред. заместителĕн—3—97, редакци секретарĕн—4—40, парти пурнăç пайĕн—0—85, ялхуçалăх пайĕн—4—97, советсен пайĕн—0—88, промышленнăç пайĕн—7—97, ялкорсен пайĕн—2—30, дежурнăйĕн—6—23.

Мухтав совет героинĕсене!

Тăван Инçет-Хĕвелтухăçри пĕр пĕчĕк пăнчă çине, пĕр чарăнмасăр инçете вĕçме тухнă геройла екипаж анса ларнă сĕм тайга хушшинчи шурлăхла лапам вырăна, пирĕн пĕтĕм аслă çĕршыв пăхса тăрат. Валентинă Гризодубăвă, Полинă Осипенко, Маринă Раскова 26 сехет те 29 минут хушшинче Мускавран Инçет-Хĕвелтухăç маршручĕ тăрăх 6.450 километр, тӳртен илсен—5.947 километр вĕçнĕ. Екипаж шурлăхсем, кӳлĕсем хушшине сунарçă ури те сайра хутра кăна йарса пусакан вырăна анса ларнă. Çакăн пек вырăна пырса тухсан сунарçă та тĕнчерен уйăрăлат, асап курат. Виçĕ хĕрарăм çухалса каймарĕç. вĕсем бођшевикла çирĕп хăйулă, чăтăмлă пулчĕç, — çаксем вĕсĕм сталинла йăхăн паха йенĕсем. Çак кунсенче пирĕн шухăшсем Валентинă Гризодубăвă, Полинă Осипенко, Маринă Раскова йулташсемпе пĕрле пулчĕç. Пирĕн кăмăлсем халăхăн çак виçĕ вăйлă, шиксĕр хĕрĕсемпе пĕрле. Вĕсен хăйулăхĕ, паттăрлăхĕ умĕнче пуç тайма тивĕç.

Сталинла соколсен ушкăнĕнчен виçĕ паттăрĕ тĕнчери хĕрарăмсенчен пуринчен те инçерех вĕçрĕç. вĕсем совет авиацин çĕнтерӳ венокĕ çине çĕнĕ лаврсем çыхса хучĕç. Америкă вĕçевçи Амели Ерхарт (вăл нумайах пулмасть Лăпкă океан урлă вĕçсе каçнă чухне пĕтрĕ) инçете тӳртен вĕçес йенĕпе хĕрарăмсем хушшинчи тĕнчери рекорда 6 çул хушши хăй аллинче тытса тăнă. Амели Ерхарт Лос-Анжелосран Ђйу-Йорка пĕр чарăнмасăр 3.900 километăра йахăн вĕçнĕ. Кăçалхи май уйăхĕнче тĕнчери рекорда малтан Франци ђотчици Лион 4.100 километр вĕçсе йышăнчĕ, унтан, каллех, Франци ђотчици Дӳпейрон пĕр чарăнмасăр тӳртен 4.360 километр вĕçсе малти вырăна йышăнчĕ. Совет ђотчицисем çак рекордран 1.500 километр ытла иртсе кайнă. Вĕсем аслă тăван çĕршыв йатне панă „Родина" самођот çинче вĕçсе, пĕтĕм тĕнчене социалисăм çĕршывĕнчи ирĕклĕ хĕрарăмсем мĕн пек тĕлĕнмеле ĕçсем тума пултарнине кăтартрĕç.

Тайгари Дуки çыранĕ хĕрĕнче, инçетри Керби патĕнче геройла епопейă пулса иртрĕ. Новоçибирскинчен пуçласа Охотски тинĕс çыранĕн хĕррисене çитичченхи пысăк вырăнта шыранă „Родина" екипажне. Ăна шырама çĕршыв 50 самођот ытла кăларса йанă. Мускав, Чита, Хабаровск радиостанцийĕсем самођота вĕçĕмсĕр чĕнсе тăнă, вĕсемпе пĕрле темиçе вуншар радиостанцисем дозорта тăнă. Çак виçĕ хĕрарăма тупас, вĕсен пурнăçне çăлас тесе вырăнти çынсем, красноармейĕçсем, сунарçăсем сĕм тайгана пур йенчен те шыраса тухнă. Çак хушăра пĕтĕм çĕршывшĕн çĕнĕ йатсем, сывлăшран „Родина" самођот екипажне шыраса тупнă Сахăрăв, Бурлаков, Деркунский ђотчиксен йачĕсем паллă пулса тăраççĕ. Хăйулă парашӳтиссем, ĕлĕк слесăр-монтажник пулнă, халĕ аслă лейтенант Йеремин, парашӳт ĕçĕн маçтăрĕ капитан Полежайĕв ђотчицăсем патне сикеççĕ. Капитан Полежайĕв 301 хут сикет... парашӳтпах Тихонăв врач сикет! Метеоролог Пођаков çурран, путса тăракан шурлăхсем витĕр пырса „Родина" самођот патне çитет. Дукире контрођнăй пунктра ĕçлекен метеоролог Пођаков пирĕн çĕршывра кашни çынах герой пулма пултарнине тата тепĕр хут кăтартса парĕ.

Совет ђотчицисем хăйсен кунçулĕ пирки шанăçлă пулнă. Вĕсем тăван çĕршыв ĕçĕшĕн вĕçнĕ. вĕсем хăйсене тăван çĕршыв пăрахса хăварас çуккине пĕлсе тăнă.

Кербирен Сталин йулташ патне йанă çырура вĕсем:

„Шурлăхра, тайгара, сопкăсем хушшинче епĕр пĕччен пулман, пирĕнпе пĕрле пирĕн нумай мĕлйунлă халăх, парти тата Есĕр, Сталин йулташ пулнă", тесе çыраççĕ.

Мухтавлă совет ђотчицисене çынсăн сталинла тăрăшни ăшăтса тăнă,—вăл вĕсем патне пиншер километрсем урлă çитнĕ. Вĕсем хăйсен çурăмĕ хыçĕнче пĕтĕм çĕршыв вăйне, ун техникин хăватне тата унăн çыннисен ăшă та хаклă сăнĕсене туйса тăнă. Пирĕн техникă та, пирĕн çынсем те çакна тепĕр хут кăтартса пачĕç: вĕсем çитме пултарайманни, вĕсем тума пултарайманни нимĕн те çук. Валентинă Гризодубăвăна, Полинă Осипенкона, Маринă Расковăна тайга тыткăнĕнчен хăтарнă, пĕтĕм халăх вĕсен аллисене çирĕппĕн чăмăртат.

«Мускав—Инçет-Хĕвелтухăç маршрутпа пĕр анса лармасăр вĕçсе тухас ĕçе ăнăçлăн та чаплăн туса çитернĕ майпа Сире хĕрӳлĕн сывлăх сунса саламлатпăр,—тесе çыраççĕ Сталин тата Молăтăв йулташсем ПСК(б)П Тĕп Комитечĕпе ССР Сойузĕн Халăх Комиссарĕсен Совечĕ хушнипе екипаж патне йанă салампа.—Вĕçнĕ чухнехи тата анса ларнă чухнехи йăвăртан та йăвăр условисенче палăрнă сирĕн хăйулăх, лăпкăлăх тата вĕçеври пысăк маçтăрлăх пĕтĕм совет халăхне савăнтарса тĕлĕнтерет".

Ленинăн—Сталинăн аслă партийĕ воспитани парса пăхса ӳстернĕ совет хĕрарăмĕ мĕн тума пултарнине кăтартса панă хăйулă виçĕ ђотчица патне çĕршывăн пур кĕтесĕсенчен те йуратупа салам сăмахĕсем вĕçеççĕ. „Советсен çĕршывĕн вĕçĕ-хĕрисăр анлă ирĕк çĕрĕсен çийĕпе, чикĕсĕр-çырансăр сывлăш океанĕнчи хăйсен çулĕ çинче тĕл пулнă шутсăр нумай чăрмавсене çĕнтере-çĕнтере, вĕсем канăçлăн та нимрен хăрамасăр малала та малала вĕçнĕ. Хăйсен хăйулă паттăрлăхĕпе вĕсем хамăрăн аслă аннемĕр—тăван çĕршыв мухтавĕпе чапне нумай хут ӳсгерчĕç... вĕсен паттăр ĕçĕ совет хĕрарăмĕн чĕринче хăйĕн çамрăк тантăшĕсемшĕн савăнтарса мухтантарат", тесе çырат ССРС халăх артистки М. М. Бђументађ-Тамаринă. Трехгорнăй мануфактурăри ткачихă Йевдокийа Масленникăвă чунтан савăнса çапла калат: „Хађ ĕнтĕ, геройла вĕçев пулса çитнĕ хыççăн, çакна ирĕксĕрех хăвăн умна тăратса пăхатăн: мĕн тери ӳссе кайрĕ пирĕн совет хĕрарăмĕ! Шухăшласа пăхас пулат кăна вĕт, епĕр тĕттĕм, çырăва пĕлмен çынсем пулнă, пирĕнтен нумайĕшне çын вырăнне те хуман, а хађ епĕр сывлăшра вĕçетпĕр. Мĕнле вĕçетпĕр тата! Хăшпĕр арçын йулташсенчен те начар мар". Вĕсемпе пĕр сăсăпах кăшкăрса калат Пашă Ангелинăн паллă та чаплă трактăр бригади: „Пит те йăвăр çутçанталăкăн условисенче çĕршыв чĕри патĕнчен—Мускавран Инçет-Хĕвелтухăçне вĕçсе тухнă героиђă-ђотчицăсен паттăрлăхĕпе тата хăйулăхĕпе чĕререн савăнатпăр".

Хăйсен хăйулăхĕпе тĕнчене тĕлĕнтернĕ тата паттăрлă ĕçсене хăнăхса çитнĕ, пирĕн халăха савăнтарнă ђотчицăсем камсем-ха вĕсем?

Вĕсем халăхран тухнă простой хĕрарăмсем. Вăл—ватă авиатăрăн, граждăнла авиаци пилочĕн Гризодубăвăн хĕрĕ. Вăл колхозницă пулса чăх-чĕп ферминче ĕçленĕ, унтан çар ђотчикĕ пулса тăнăскер—капитан Осипенко. Вăл музыкант—учителницă хĕрĕ, аслă штурмăн—аслă лейтенант Раскова. Вĕсем ĕççыннисен ретĕнчен тухнă, халăхпа таччăн çыхăнса тăракан, ĕçхалăхĕшĕн ĕçлекен совет интеллигенцин представителĕсем. Çавăн пек хĕрарăмсем социалисăм çĕршывĕнче, хĕрарăма праваçăрлăхпа асаплăхран хăтарнă çĕршывра çеç пулма пултараççĕ. Çавăн пек интеллигентсем социалисăм çĕршывĕнче, халăх хăйĕн интеллигенцине совет çĕрĕ çинчи чи пуйан йапала вырăнне хурса хаклакан çĕршывра çеç пулма пултараççĕ!

Полинă Осипенко, Валентинă Гризодубăвă тата Маринă Раскова—çаксем пурте Ленин—Сталин партийĕ вĕрентсе ӳстерĕскерсем. Партипе правителствă шанчăкне тӳрре кăларчĕç вĕсем. Гризодубăвă, Осипенко тата Раскова пайан рекордла вĕçеве кайнăскерсем, ыран, кирлĕ пулсан, сывлăшра тăшмана хирĕç çапăçăва тухма пултараççĕ. Осипенко—пилот тата Расковă—çар авиаци штурмăнĕ. Вĕсен пилоткисем çинче —красноармейĕçсен çăлтăрĕсем. Хĕрлĕ Çар пĕтĕм халăхпа пĕрле вĕсем пек красноармейĕçсемпе мухтанса савăнат!

Пирĕн ђотчицăсем Сталин йулташ патне, Мускавран Амур шывĕн çыранĕсем патне çити унăн йачĕпе вĕçни çинчен çыраççĕ. Сталин йачĕ Çурçĕр пођусне çĕнсе илекенсене хавхалантарчĕ. Çак йат Мускавран Америкăри Пĕрлешӳлĕ Штатсене вĕçсе каçнă. Мускавран Владивосток районне, Мускавран Арктикăн инçетри вырăнĕсене вĕçсе тухнă çынсен ирĕкĕпе кăмăлне тытса пынă. Сталин йачĕ—пирĕн çĕршыври çĕнтерӳсен çимвăлĕ. вăл йат тăван çĕршывăн вăйĕне хăватне тĕреклетессишĕн ывăнма пĕлми ĕçлекен пирĕн рабочисен, пирĕн хресченсен, пирĕн интеллигенцин йалавĕ. Сталин йулташ йачĕ—ђотчиксен рекорчĕсенче, стахановĕçсен чаплă ĕçĕсенче. Сталин йатне совет çыннисем чĕрере тытса тăван çĕршывăн чапĕшĕн малашне те сахал мар паттăрлă ĕçсем туса пырĕç.

(„ПРАВДА" умстатйи, октябрĕн 8-мĕш)

КЕРБИ

„Родина" самођотăн екипажне В. Гризодубăвă, П. Осипенко, М. Расковă йултăшсĕне

Мускав—Инçет-Хĕвелтухăç маршрутпа пĕр лармасăр вĕçсе тухас ĕçе ăнăçлăн та чаплăн туса çитернĕ майпа Сире хĕрӳлĕн сывлăх сунса саламлатпăр.

Есĕр маршрутпа 6.450 километр, тӳрĕ линипе шутласан—5.947 километр тăршшĕне 26 сехет те 29 минут хушшинче паттăрăн вĕçсе тухни—тӳрĕ линипе, çавăн пекех кукăр-макăр линипе вĕçсе хĕрарăмсем тунă пĕтĕм тĕнчери рекорд пулса тăрат.

Вĕçнĕ чухнехи тата анса ларнă чухнехи йăвăртан та йăвăр условисенче палăрнă сирĕн хăйулăх, лăпкăлăх тата вĕçеври пысăк маçтăрлăх пĕтĕм совет халăхне савăнтарса тĕлĕнтерет.

Сирĕнпе мухтанатпăр тата Сирĕн аллăрсене пĕтĕм чунтан чăмăртатпăр.

ПСК(б)П Тĕп Комитечĕ тата ССРС
Халăх Комиссарĕсен Совечĕ хушнипе

И. СТАЛИН.
В. МОЛĂТĂВ.

*

ССР Сойузĕн Халăх Комиссарĕсен Совечĕпе ПСК(б)П Тĕп Комитечĕ йышăннă постановлени

1. „Родина" самођот пĕр анса лармасăр вĕçессине организацилес тата вăл вĕçеве ăнăçлăн вĕçлес йенĕпе пысăк ĕçсем туса иртернĕшĕн: М. М. Каганович, А. Д. Локтионăв тата М. Ф. Картушĕв йулташсенчен тăракан Правителствă Комиççине тав тăвас.

2. Правителствă Комиççине „Родина" самођота шыранă чухне тата унăн екипажне тупнă вырăнтан илсе тухас çĕрте хăйсене палăртнă йулташсен спискине наградăсем пама тăратма хушас.

ССРС Халăх Комиссарĕсен Совечĕн председателĕ
В. МОЛĂТĂВ.

ПСК(б)П Тĕп Комитечĕн çекретарĕ
И. СТАЛИН.

*

Кербирен 7-X-38 ç.

МУСКАВ, КРЕМЂ

Сталин, Молăтăв, Каганович, Ворошилăв, Йежов, Микойан, Калинин, Жданăв, Андрейĕв йулташсене

Сирĕн заданине пурнăçа кĕртнĕ. „Родина" самођот çинче Мускавран Инçет-Хĕвелтухăçне çити пĕр анса лармасăр вĕçессине 26 сехет те 29 минут хушшинче пурнăçа кĕртнĕ. Самођот Амгуђ йуханшыв патĕнчи шурлăхла хире анса ларнă. Екипаж сывах, материаллă чаççем йусавлă.

Пирĕншĕн сталинла тăрăшнăшăн тата пире пулăшас тĕлĕшпе тунă ĕçсемшĕн Сире пĕтĕм чĕререн тав тăватпăр.

Партипе правителствăн кирек мĕнле заданине те пурнăçа кĕртме хатĕр.

Гризодубăвă, Осипенко,
Раскова.

*

„Родина" самођот екипажĕ Кербире

Октябĕрĕн 7-мĕшĕнче „Родина" самођотăн хăйулă екипажĕ катĕрсем çине ларса Амгуђ тăрăх Каменкă йалне çитнĕ. Çав кунах катĕр Каменкăран Кербине тухса кайнă, Мускав вăхăчĕпе 15 сехетре Кербине çитнĕ. Тăван çĕршывăн шиксĕр хĕрĕсене Кербири пĕтĕм халăх савăнăçлăн хавхаланса саламланă. Çавăнтах, йуханшыв çыранĕнчи пысăк мар площечĕ çинче, митинг пулса иртнĕ.

15 сехет те 45 минутра Мускавпа Керби тӳрех çыхăнса пĕр-пĕрине каланă. Мускавра провод умĕнче: ССРС Çыхăну Халăх Комиссарĕ Берман йулташ, вĕçев ĕçĕсемпе ĕçлекен правителствă комиççин членĕ Картушĕв йулташ, вĕçев штабĕн начађникĕ Антонăв йулташ тата ыттисем те пулнă.

Кербире аппарат умне В. С. Гризодубăвă пынă.

Гризодубăвă йулташ Сталин йулташ йачĕпе çырнă телеграмма текстне тата Сталин, Молăтăв, Л. М. Каганович, Ворошилăв, Йежов, Микойан, Калинин, Жданăв, Андрейĕв йулташсен йачĕпе çырнă иккĕмĕш телеграмма текстне панă. Унтан Гризодубăвă йулташ вĕçев мĕнле пыни çинчен тата хăй екипажĕн сывлăхĕ мĕнли çинчен каласа панă.

(ТАСС).

Совет ђотчикĕсен чаплă рекордлă вĕçевĕ

Вĕçев штаб начађникĕн Д. И. Антонăв й. статйинчен

Пирĕн тăван çĕршывăн шиксĕр ђотчикĕсем—Валентинă Гризодубăвă, Полинă Осипенко тата Маринă Раскова—Мускавран Инçет-Хĕвелтухăçне гигантла пысăккăн сиксе ӳкрĕç. 26 сехет те 29 минут хушшинче вĕсем пĕр лармасăр вĕçсе, тӳрĕ линипе шутласан, 5.947 километр вĕçнĕ, çăннипе вĕçсе тунă çул тата чылай вăрăмрах. Çапла вĕçсе ĕнтĕ хĕрарăмсен пĕтĕм тĕнчери рекордне—кăçалхи çул Франци ђотчици Лион инçене пĕр лармасăр вĕçсе тунă рекорда нумай кайа тăратса хăварчĕç. Ђотчица Лион тӳрĕ линипе 4.100 километр кăна вĕçнĕ.

Пирĕн ђотчицăсем, мухтавлă сталинла сокăлсем, хăйсем тем тума та хатĕррине, хăйсен геройлăхне, нимĕнрен хăрамаллăхне, совет хĕрарăмĕсем кирек хăш минутра та арçынсемпе пĕр танах хăйсен йуратнă тăван çĕршывне сыхлама хатĕр тăнине пĕтĕм тĕнче умĕнче кăтартса пачĕç.

Çапла инçене пĕр лармасăр вĕçме шиксĕр ђотчицăсем нумай вăхăт тата тĕплĕн хатĕрленчĕç. Вĕсен вĕçевĕн планне аслă Сталин ырланă тата правителствă çирĕплетнĕ.

Самођота çĕр çинчен вĕçтерсе çĕклентерсе кайма йăвăр пулнă, унăн пĕтĕм йăвăрăшĕ 12,5 тоннă пулнă. Инçете рекордлă вĕçев тума çакнашкал пит йăвăр тийенĕ икĕ моторлă машинăпа тухса кайни совет ђотчикĕсем хушшинче халиччен никам та пулман-ха. Анчах пирĕн чаплă ђотчицăсем ку йăвăр ĕçе калама çук чаплăн пурнăçа кĕртрĕç, йăвăр самођота çĕр çинчен пит лайăх вĕçтерсе çĕклентерчĕç.

Екипажа кирлĕ хатĕрсем парас ыйтăва уйрăмах тĕплĕн пăхса тухнă. Вĕçевре мĕн кирлисем, çавăн пекех аеродром çине мар анса ларас пулсан мĕн кирлисем Гризодубăвă, Осипенко тата Раскова йулташсен йăлтах пулнă.

Хăйсен геройла вĕçевне пирĕн шиксĕр ђотчицăсем çентябĕрĕн 24-мĕшĕнче 8 сехет те 12 минутра пуçларĕç. Вĕçев пуçламĕшĕнче çанталăк вĕçевшĕн лайăх пулнă, анчах вăл часах пысăккăн улшăннă, вăра малала вĕçев çутçанталăкăн йăвăр условийĕсенче пулса пынă. Хăй çулĕн чылай пысăк пайĕнче „Родина" самођот пĕлĕтсем хушшипе нимĕн курмасăр вĕçсе пынă.

Çентябĕрĕн 25-мĕшĕнчи ирччен „Родина" самођотпа çыхăну тытса тăнă. 6 сехет те 52 минутра „Родина" самођот çинчен йулашки радиограммă илнĕ.

Самођот сывлăшра тытăнса тăма пултарнă вăхăт иртсен (çунтармалли запас пĕтсе çитсен) самођота шырама пуçланă.

Çыхăну татăлнă май вĕçев штабĕ умне йăвăр ыйту—самођот анса ларнă вырăна пĕлес ыйту тухса тăчĕ. „Родина" самођот Казачинское—Хабаровск—Айан—Казачинское хушшинчи виçкĕтеслĕхе кĕрекен калама çук пысăк, пурĕ 1.700 тăваткăл километр шутланакан лаптăк çинче кирек хăш вырăна ларма та пултарнă.

Вырăнти халăхран массăллăн ыйтса пĕлсе тата самођот курнă çынсенчен сведĕнисене пĕр пĕрине килĕштерсе пăхса, самођот ларма пултарнă тесе шутланакан темиçе район палăртса хунă.

„Родина" самођота шырас ĕçе кунсеренех темиçе пин çын—красноармейĕçсем, вырăнта пурăнакансем, вăл районсене лайăх пĕлекен çынсем хутшăнса ĕçленĕ. Шырас ĕçре кунсеренех 35—50 самођот пулнă.

Самођот Керби районĕ тĕлĕпе вĕçсе иртни çинчен тĕплĕрех сведĕнисем илнĕ хыççăн, октябĕрĕн 1-мĕшĕнчен пуçласа унта самођотсем йанă. Вăл районта тĕплĕн сăнаса пăхса тухса, Граждăнла сывлăш флочĕн ђотчикĕсем Сахăрăв тата Бурлаков йулташсем октябĕрĕн 3-мĕшĕнче „Родина" самођота тупнă, самођот Комсомођск хулинчен 160 километрта, Дуки поçолăкĕнчен 10—15 километрта пулнă. Самођот патĕнче Гризодубăвăпа Осипенко пулнă. Çав кунах вĕсене апат-çимĕç тата кирлĕ йапаласем пăрахса панă, çавăн пекех тата екипажăн виççĕмĕш членне—штурмăн Расковă йулташа шырас тĕлĕшпе васкавлă ĕçсем тума пуçланă.

Октябĕрĕн 4-мĕшĕнче „Родина" самођот патне сывлăшран десант антарнă. Çав кунах ђотчик Деркунский йулташ Раскова йулташа шыраса тупнă.

Октябĕрĕн 5-мĕшĕнче „Родина" екипажне пулăшас тĕлĕшпе тумали ĕçсене пĕтĕм вăйпах сарса йанă.

Октябĕрĕн 6-мĕшĕнче Сахăрăвпа Деркунский йулташсем пĕрремĕш хут вĕçсе кайсах Раскова йулташ самођот патне пырса çитнине палăртнă.

Çак сведĕнисене илнĕ хыççăн „Родина" екипажне çийĕнчех Амгуђ шывĕ патнелле тухса утма распорйажени панă. Ирхине 10 сехетре Гризодубăвă, Осипенко тата Раскова йулташсем пĕтĕм парашӳтиссемпе пĕрле хăйсен лагерĕнчен тухнă. Вĕсен тайгапа сопкăсем витĕр шурлăхла вырăнсем тăрăх 12 километра йахăн тухмала пулнă. 18 сехет те 30 минутра пĕтĕм ушкăн Амгуђ шывĕ патне çитнĕ.

Октябĕрĕн 7-мĕшĕнче 7 сехет те 55 минутра „Родина" самођотăн шиксĕр екипажĕ тата парашӳтиссем пĕчĕк кимĕсем çине ларнă, Амгуђ йуханшывĕ тăрăх Каменка патнелле çул тытнă. Анчах вĕсем 20 километр ишме те ĕлкĕреймен, вĕсем патне катĕр пырса çитнĕ. Катĕр çине куçса ларса, екипаж малала кайнă.

Мускав вăхăчĕпе 15 сехетре Гризодубăвă, Осипенко тата Раскова йулташсем Кербине пырса çитнĕ. Шиксĕр сывлăш героинисене Керби халăхĕ чунтан савăнса саламланă.

Çĕнĕрен илнĕ сведĕнисем тăрăх, „Родина" самођот тайгана октябĕрĕн 25-мĕшĕнче, Мускав вăхăчĕпе 10 сехет те 41 минутра анса ларнă. Октябĕрĕн 4-мĕшĕнче „Родина" самођот патне аннă парашӳтиссем—капитан Полежайĕв тата аслă лейтенант Йеремин контрођ приборĕсене пăхса тухнă. Приборсем пĕри те çĕмĕрĕлмен. Çавăнтах вара тĕнчери Авиацин пĕтĕм Федераци (ФАИ) правилисем тăрăх акт çырнă.

Виçĕ совет героини хăйсен вĕçевне калама çук чаплăн туса çитерчĕç, совет авиаци ӳсĕмĕн историне çĕнĕ чаплă страницă çырса хучĕç. Çак вĕçевпе вĕсем çакна кăтартса пачĕç: çĕр çинче пирĕн авиаци çитеймен вырăнсем çук.

Совет авиацийĕ пĕтĕм тĕнчене мирлĕ пурнăç кӳрет, анчах тăшман пирĕн мирлĕ строителствăна пăсма хăтланасан, совет самођочĕсем ун çине хăрушă вăйла йăтăнса пырĕç, тăшмана çĕр пичĕ çинчен шăлса ывăтĕç.

Кербирен, 7-X-38 ç.

Мускав, Кремђ СТАЛИН йулташа

Сирĕн йатă хамăр чĕрере тытса пырса епĕр, аслă социалисăмлă тăван çĕршывăн хĕрĕсем, пĕлĕтлĕ, тĕтрелĕ çанталăкра, самођот пăрланнине çĕнтерсе, çĕрлехи вăхăтра, анăн сарăлса выртакан тăван çĕршывăн чĕринчен—Мускавран Амур шывĕн çыранĕсене çитĕ пĕр анса лармасăр вĕçсе тухрăмăр. Шурлăхра та, тайгара та, сăрт-тусем хушшинче те епĕр пĕччен пулман—пирĕнпе пĕрле нумай мĕлйунлă пĕтĕм халăх, парти тата Есĕр пулнă, Сталин йулташ. Пирĕншĕн атте пек тăрăшнăшăн спаçибă.

Гризодубăвă, Осипенко, Раскова.

Хĕллене хатĕрленессине вăйлатмала

Хĕллехи вăхăтра ăнăçлăн ĕçлес çи хĕллене лайăх хатĕрленессе кĕнинчен килет. Çакна кашни предпрйайати, хуçалăх организаци, учрежденин руководителĕн, профсойуз работникĕн тĕплĕн ăнланса илмеле. Тек ĕнтĕ „вăхăт пур", „ĕлкĕретпĕр" тесе халапласа ларма вăхăт çук, хĕл чӳречерен шаккат. Вăхăтра вăраха йамасăр 1938—39 çулхи хĕллене пур йенчен те çак кунсенчех хатĕрленсе çитмеле тăвас пулат.

Хĕллене хатĕрленнĕ май предпрйайатисенче, учрежденисенче, промысла ертелĕсенче, вăрман участокĕсенче мĕнле ĕçсем туса иртермелли пурришĕн те паллă. Промышленнăç предпрйайатисенче хĕллечен цехсене, пурăнмалли тата ытти çуртсене йусамала. Кантăксем лартмала, кăмакасем тумала, транспорта йĕркене кĕртмеле тата ытти нумай тĕрлĕ ĕçсем тумала. Çаксене тăвасси çинчен ку тарана çитиччен нумай каланă пулин те, чылай çĕрте хĕллене хатĕрленесси çаплах йĕрипен пырат.

Çĕмĕрле комбинатĕнче пурăнмалли çуртсенчи кăмакасене халĕ те йусаса çитермен. Чылай цехсен кантăкĕсем çĕмрĕк. Уйрăмах унта çĕнĕ строителствă планне тултарасси начар пырат. Капитађнăй ĕçсене тума 1550 пин тенкĕ хывмала пулнă пулсан, октябĕр уйăхĕ тĕлне 509 пин тенкĕпе çеç уçă курнă. Водопровод тăвасси хăрушлăх умĕнче тăрат. Клуба 1937 çулхи октябĕр уйăхĕнче туса пĕтермелле палăртнă. Халĕ те туса пĕтермен, строителствă планне 60,4 процент çеç тултарнă. Çапах та комбинат руководителĕ Шалыкăв йулташ, çавнашкалах партипе профсойуз организацийĕсем те, решенисем çырнисĕр пуçне нимĕн те татăклă ĕçсем те тумаççĕ.

Куславкка комбинатĕнче хĕллене хатĕрленес ĕçсене туса пыма тесе комиççи уйăрнă. Анчах комиççи пайăн çитсе мĕн чухлĕ те пулин палăрмаллăх ĕçсем туман. Комбинат руководителĕсем те комиççи çине шанса ларнă, хĕллене хатĕрленес тĕлĕшпе ĕçлемеççĕ. Çапла, çуртсене йусас, цехсене йĕркене кĕртес йенĕпе, тивĕçлĕн ĕçлеме пуçăнман-ха.

Вăрман хатĕрлевне ĕçлеме кайас текен колхозниксем догăвăрсем тунă чухне чи малтан: „Сирĕн общежитисем мĕнле?" тесе ыйтаççĕ. Вăрман хатĕрлекен организацисен задачи—ĕçлеме пыракансене лайăх йышăнса илсе ĕçлеме, пурăнма аван условисем туса парасси пулат. Анчах „Чăвашвăрмапром" тата вăрмапромхозсем ку йенĕпе нимĕн чухлĕ те мухтанма пултараймаççĕ. Баракĕсене, общежитисене йусаса пĕтермен, çĕнĕ çуртсем тăвассине пурнăçа кĕртмен. Кам туса парасса кĕтсе тăраççĕ-ши вара вĕсем?

Хĕллене хатĕрленес ĕçсене пурнăçа кĕртнĕ çĕрте партипе совет тата профсойуз организацисем çинче пысăк ответлăх тăрат. Парти райкомĕсемпе райĕçтăвкомсен хăйсен районĕнчи кашни предпрйайати, мастерской, хуçалăх тата культурă организаци хĕллене мĕнле хатĕрленнине тĕрĕслесе пырса йĕркесĕрлĕхсене пĕтерес тĕлĕшпе татăклă ĕçсем тумала. Профсойуз организацисен хуçайствинксем пурăнмалли çуртсене, клубсене, йаслĕ ĕне тата ыттисене хĕллене хатĕрлес тĕлĕшпе мĕнле ĕçленине тĕрĕслесе тăрас, çитменлĕхсене çийĕнчех палăртса тăмала тăвас пулат. Графика пурнăçа кĕртнине, укçа-тенкĕле тĕрĕс усă курнине тĕрĕслесе тăмала.

Хĕллене хатĕрленесси—хуçалăх руководителĕсен, партипе профсойуз организацисен пайанхи кĕсеплĕ задачĕ пулса тăрат. Çак кунсенчех çуртйĕрсене, хапрăк савăтсене, мастерскойсене, културă, государствă учрежденисен çурчĕсене хĕллехи вăхăтра йĕркелĕн те ăнăçлăн ĕçлеме хатĕрлемелле.

ПАРТИ ПУРНĂÇĔ

Парти пухуне хатĕрленмесĕр ирттерессĕ

Октăберĕн 3-че Вăрнар поçолăк совечĕ çумĕнчи пуçламĕш парторганизацин пухăвĕ пулса иртрĕ.

— Пленпа пайанхи пухура ПСК(б)П Чăваш организацийĕн облаçри XIX-мĕш конференци ĕçĕсем çинчен доклад пулмалаччĕ. Материалсем çителĕклĕ мар, решени те çук, çавăнпа „Труд" ертелĕн отчотне итлемеле пулать, — тесе пĕлтерчĕ парторг. Зайцĕв йулташ, пухăва уçса.

Парторгăн малтан коммуниссен ирттĕ пухăвĕ йышăннă решенине мĕнле пурнăçа кĕртни çинчен каласа памалаччĕ. Анчах Зайцĕв йулташ ун пек тумасть. Ирттĕ пуху йышăннă решенине мĕнле пурнăçа кĕртнине нихăçан та коммуниссене пĕлтермест.

Çапла вара, пуху хатĕрленмесĕр пулса иртрĕ.

Пухура „Труд" ертелĕн ĕçĕсем çинчен правлени председателĕ Зайцĕв йулташ доклад туса пачĕ. Вăлах парторг пулса ĕçлет. Промысла ертелĕ чăматансем, арчасем, йăвăç кашăксем, ачасене вылямали йапаласем, пуртă аврисем, шыв кĕвентисем, вăлашкасем, йăвăç кĕреçесем тата ытти килте куллен кирлĕ йапаласем туса кăларать. Ертелĕн йăвăç çителĕклĕ, ĕçлекенсем те пур. Апла пулсан та Вăрнарта вăл йапаласене тупса илме çук. Промысла ертелĕн 1938 çулта 788420 тенкĕлĕх продукци туса кăлармала. Çентăберĕн 1-мĕшне 407700 тенкĕлĕх çеç туса кăларнă.

— Пире районти организацисем пулăшмаççĕ. 1934 çултанпа райĕçтăвком президиумĕнче пирĕн ертелĕн отчотне пĕре те итлемен. Ертел ĕçĕпе парти райкомĕ те интересленмест, пире кăтарту памасть, — тет Зайцĕв йулташ. Анчах ертелри çитменлĕхсем çинчен, правлени тата вăл хăй начар ĕçлени çинчен Зайцĕв йулташ сахал чарăнса тăчĕ. „Труд" ертелĕнче сăтăрçăсен йулашкийĕсене пĕтерессипе нимĕн те туман-ха. Аппаратра йурăхсăр, тÿрĕ мар етемсем ĕçлеççĕ. Сушилка çунса кайнă хыççăн парторг нимĕнле вывăд та туман.

Ертелре 450 çын ĕçлет, вăл шутран стахановецсем 24 çын, ударниксем 31 çын. Стахановецсемпе уйрăмăн ĕçлемеççĕ. Канашлусем, калаçусем ирттермеççĕ. Аслă Октăбер уйавĕ умĕнхи социалисăмлă ăмăртăва хутшăнассине те вырăнтан тапратман-ха. Ертелĕн штатлă культработникĕсем 2 шутланаççĕ. Апла пулин те стена хаçачĕ уйăхра 2 хут çеç тухать. Культмассăлă ĕç çÿлĕ вырăнта мар.

Ертелре продукци пахалăхĕшĕн кĕрешес ĕç те начар тăрать. Сĕтел-пукансене, шкафсене чĕрĕ йăвăçран тăваççĕ.

Коммуниссен пухăвĕ ертел ĕçĕнчи çитменлĕхсене кăтартса, вăл çитменлĕхсене пĕтерме пĕтĕм рабочисен массине мобилизацилеме йышăнчĕ.

Д. Обофорăв.

ПСÇЛКС Чăваш Обкомĕн пленумĕ

Октăберĕн 4 — 6-мĕшĕсенче ПСÇЛКС Чăваш Обкомĕн IV-мĕш пленумĕ пулса иртрĕ. Пленум ПСÇЛКС Тĕпкомĕн VI-мĕш пленумĕн итогĕсем çинчен тата комсомолăн йертсе пыракан органĕсен çитес суйлавĕ çинчен сÿтсе йаврĕ.

Пленумра тухса калаçакансем ПСÇЛКС Обкомĕн ĕçне хытă критиклерĕç, Обком комсомол райкомĕсене йапăх йертсе пынине палăртрĕç. Çапах та пренисем, комсомол Обкомĕн çекретарĕ Никифăрăв йулташ туса панă доклад йевĕрлех, политикăлă çивĕч, облаçри парторганизацин XIX-мĕш конференци решенийĕсене пурнăçа кĕртме, комсомол ретĕнчи халăх тăшманĕсен йулашкисене çĕмĕрсе тăкма мобилизацилемелĕх пулмарĕç.

Пленумра парти Обкомĕн пĕремĕш çекретарĕ Волкăв йулташ тухса каларĕ. Вăл облаçри парторганизацин XIX-мĕш конференци итогĕсем çинчен тĕплĕн каласа пачĕ тата пленум çителĕксĕр ĕçленине хытă критиклерĕ.

Сÿтсе йавнă ыйтусем тăрăх пленум решенисем йышăнчĕ.

ПСÇЛКС Обкомĕн IV-мĕш пленумĕ облаçри парторганизацин XIX-мĕш конференци решенийĕсене ырларĕ тата Г. Иванов председателе ПСÇЛКС Чăваш Обком пленумĕн составĕнчен кăларчĕ.

ПСÇЛКС Обкомĕн пленумĕ Гуçкова йулташа пленум составĕнчен тĕрĕс мар кăларнă тесе, IV-мĕш пленум ăна пленум членне кайала илме йышăнчĕ.

Пленум ПСÇЛКС Чăваш Обкомĕн пионерсен пайĕн заведуйушчийĕ пулма В. А. Урÿкăва йулташа çирĕплетрĕ.

Пленум самокритикăсăр иртрĕ

ПАТĂРЙЕЛ. Октăберĕн 2-мĕшĕнче комсомол райкомĕн пленумĕ пулса иртрĕ. Пленум комсомол райкомĕн отчотне итлерĕ. Райком çекретарĕн Йелисейĕв йулташăн докладĕнче конкретлă примерсем, çитменлĕхсене критикленисем пулмарĕç. Районри комсомол организацийĕнче çитĕнÿсем те, çитменлĕхсем те çук мар, анчах докладчик вĕсене палăртмарĕ. Тухса калакансен сăмахĕсенче те самокритикă сахал пулчĕ.

Пленумра парти райкомĕн çекретарĕ Мочалов йулташ тухса каласа, комсомол ĕçĕнчи пысăк çитменлĕхсене кăтартса пачĕ.

Районра 900 ытла комсомолец, вĕсенчен 10—15 çын çеç парти ретне кĕнĕ, сăтăрла ĕçсен йулашкисене пĕтерес тĕлĕшпе çителĕксĕр ĕçлеççĕ. Комсомол хуçалăхĕнче пысăк йĕркесĕрлĕхсем пур.

Райком çекретарĕ Йелисейĕв тата пионер пайĕн пуçлăхĕ Герасимăв йулташсем Хĕрлĕ Çара кайнă май, пленум вĕсене ĕçрен хăтарчĕ.

П-н.

Парти активĕн районри пухăвĕ

ТРАК. Октăберĕн 3-мĕшĕнче парти активĕн районри пухăвĕ пулса иртрĕ. Пухура райком çекретарĕ Çвешникăв йулташ ПСК(б)П облаçри XIX-мĕш конференцийĕ çинчен доклад туса пачĕ.

Пренире 12 çын тухса каларĕç. Вĕсем хăйсен сăмахĕсенче райкомăн çитменлĕхĕсене тивĕçлипе критиклерĕç.

Парти истори кĕске курсне вĕрентме пропагандиссем хатĕрлес тĕлĕшпе пĕр çеминар пекки ирттернисĕр пуçне нимĕн те туман. Парти истори сыпăкĕсене вуласа пырас ĕçе йĕркелемен. Вĕренÿ ĕçе районри актив хушшинче те тивĕçлĕ вырăнта мар.

Райĕçтăвком, çĕрĕç пайĕ тата МТС йапăх ĕçленине пула кĕрхи çĕртме планне 19 процент çеç тултарнă. Йалхуçалăх ĕçĕнчи çĕнĕ кадрсене вĕрентсе пымаççĕ. ПСК(б)П Обкомĕн йалхуçалăх пайĕн пуçлăхĕ пулнă Кольцов района пырса нимĕнле кăтартусем те паман, инструктăр Абакумăв та, района пырсан, кайала таврăнма машинă кирлĕ пулсан çеç МТС станцине пырса курăнкаланă.

Парти райкомĕ комсомол организацисене йертсе пыман. Комсомол райкомĕ МТС çумĕнчи комсомол комитечĕн çекретарне Герасимăва март уйăхĕнчех кăларнă, унтанпа вăл комитет çекретарсăрах пурăннă. Райком работникĕсем унта пырса та курман.

Районри халăх сучĕ ĕçсене вăраха тăсса пырать. Çентăберĕн 29-мĕшĕнче судйа Васильйĕв йулташ 20 ĕç ытла пăхса тухма палăртса, çынсем чĕнтернĕ. Хăй вăл кун 10—11 сехетре çеç ĕçе пынă пирки 7 ĕç пăхса тухма çеç ĕлкĕрнĕ, ытти ĕçсем тăрăх пынă çынсем кунĕпе кĕтсе ларни те ахалех пулнă.

Тухса калаçакансем райком çекретарĕ Çвешникăв й. çинчен нумай чарăнса тăчĕç. Çвешникăв йулташ Йетĕрне районĕнче Обком çекретарĕ пулнă икĕ питлĕ Ивановпа пĕрле ĕçленĕ. Трак районне пырсан вăл „епĕ Ивановпа пĕрле ĕçленĕ" тесе мухтаннă.— Иванов Трак вальди татах çынсем парать, кайас текенсене чарас мар, — тенĕ вăл. Çавăнпа та районран чылай коммуниссем тухса кайнă.

Райкомăн 3-мĕш çекретарĕ Тихăнăв йулташ, Çвешникăв Иванов предательле мухтани çинчен каларĕ. Çвешникăв çентăберĕн 13-мĕшĕнче, Шупашкар хула организацин конференцийĕпе Обком пленумĕ пулас умĕн, райком членĕсене района „таса çынсем"— Жукăвпа Осипăв килеççĕ, районран кирлĕ мар çынсене ăсатасси пирки Ивановпа калаçса татăлтăм, тесе пĕлтернĕ.

Парти Шупашкар хула организацин конференцийĕпе Обком пленумĕн материалĕсене коммуниссем пухăнса сÿтсе йавасшăн пулнă, актив пухăвĕ пуласса кĕтнĕ. Анчах райком çак ĕçе пропагандиссен çеминарне ирттернипе, ун çинчен çиелтен калаçкаланипех сырлахтарнă.

Актив пухăвĕ Çвешникăв тунă докладра критикă вăйлă пуласса кĕтнĕччĕ, анчах вăл пулмарĕ.

Трак районĕнчи партактив пухăвĕ ПСК(б)П Чăваш организацин XIX-мĕш конференци решенийĕсене ырларĕ. Пуху критикăпа самокритикăна анлăн сарса йарса, çитменлĕхсене хăвăрт пĕтерме палăртса хăварчĕ.

Закамский.

Иккĕмĕш Çессин йышăннă саккунсене вĕренеççĕ

Йелчĕк районĕнчи йалсенче ССР Сойуз Верховнăй Совечĕн Иккĕмĕш Çессийĕ йышăннă саккунсене колхозниксемпе йединоличниксене ăнлантарас ĕç вăйланса пырать. Çакăнпа пĕрлех йединоличниксем колхоза кĕресси те ÿсет.

Аслă Тайапара Иккĕмĕш Çесси йышăннă саккунсене вĕренме пурĕ 8 кружок организациленĕ. Кружокри занятисенче „Йединоличниксен хуçалăхĕсен лашисем çине государствă налогĕ хурасси çинчен" тата халăх вăхăтри тĕнчери лару-тăру çинчен ăнлантарса параççĕ. Çакăн хыççăн Аслă Тайапари Карл Маркс йачĕпе тăракан колхоза 14 йединоличник хуçалăхĕ кĕнĕ.

Тăрăмра Иккĕмĕш Çесси йышăннă саккунсене вĕренме пурĕ 7 кружок организациленĕ. Вăл кружоксенче 357 çын ытла вĕренет. Ку таранччен кружок занятийĕсенче „ССРС, сойузлă тата автономлă республикăсен судоустройствă саккунĕ çинчен", „Уйрăм хуçалăхсен лашисем çине государствă налогĕ хурасси çинчен" йышăннă саккунсене вĕреннĕ. Çакăн хыççăн Тăрăм колхозне 3 хуçалăх хутшăннă. Çавăн пекех Кĕçĕн-Тайапари „Коммуниист" колхоза 17 хуçалăх, Кушкăри „КИМ" колхоза 3 хуçалăх çĕнĕрен кĕнĕ.

Çак хушăрах хăшпĕр йалсоветсенче ССР Сойузĕн Верховнăй Совечĕн Иккĕмĕш Çессийĕ йышăннă саккунсене йалти халăха тĕплĕн ăнлантарас ĕçе тытăнман-ха. Акă, Патрекел йалсоветне илер. Кунта йалсоветпа колхоз активĕ те çителĕклĕ. Вулав çурчĕ, библиотекă пур. Комсомолецсемпе учительсем те сахал мар. Апла пулин те йалсоветĕнче ССР Сойуз Верховнăй Совечĕн Иккĕмĕш Çессийĕ йышăннă саккунсене йалти халăха вĕрентесси çинчен шутламаççĕ. Йалсовет председателĕ Гаврилăв й. хĕрсе ĕçлемеле чух, час-часах ĕçсе çÿрет.

Çĕнĕ Пăва, Аслă Пăва-Тимĕш, Йелчĕк, Кивĕ Ейпеç йалсовечĕсенче те ССРС Верховнăй Совечĕн Иккĕмĕш Çессийĕ йышăннă саккунсене халăха ăнлантарас тĕлĕшпе ĕçлеме тытăнман.

Гер. Иванов.

Укçа-тенкĕ пухас ĕçе вăйлатар

ИШЛЕЙ. Массă хушшинче ССР Сойуз Верховнăй Совечĕн 2-мĕш Çесси йышăннă саккунсене ăнлантарни, уйрăмăнах ССР Сойузĕн государствă бюджечĕ çинчен ăнлантарса пани укçа-тенкĕ пухас ĕçе те урăхлатса çĕнетме пулăшрĕ. Налог агенчĕсем йалсоветсенчи финанс çекцисемпе пĕрле ĕçлесе сахал мар çитĕнÿсем турĕç.

Чурачăк йалсоветĕнчи колхозниксемпе йединоличниксене ССР Сойуз Верховнăй Совечĕн Иккĕмĕш Çессийĕ йышăннă саккунсене ăнлантарса париччĕн йалсовет, государствă умĕнчи ытти парăмсене пухас йенĕпе кайра пынă пекех, укçа-тенкĕ пухас ĕçре те таврари йалсоветсенчен кайра пынă. Налог агенчĕ Петр Магазейĕв йулташ çакна кура ĕçе вирлĕн пуçăнчĕ. Массăла ăнлантарулă ĕçе нихăçанхинчен ытла вăйлатнипе вăл йалсовечĕн 3-мĕш квартăлта укçа-тенкĕ пухас планне 115,7 процент тултарчĕ. Çакăн пекех укçа-тенкĕ пухас плана Тăрăн йалсовечĕ 114,4 процент, Тарăнçырма йалсовечĕ 107,5 процент тултарчĕç. Ку йалсоветсенче налог агенчĕ Павел Миронăв йулташ тăрăшса ĕçлерĕ. Хăймалакасен йалсовечĕ те ытти йалсоветсенчен йулмасть. Кунта та налог агенчĕ йалсоветри финанс çекципе ĕçлессине лайăх йĕркелерĕ. Вăл тăрăшнипе йалсовет 3-мĕш квартăлти финанс планне 112,8 процент тултарчĕ.

Налог, страховкă укçисене пухас ĕçсем лайăхланнипе пĕрлех „Виççĕмĕш Пилĕкçуллăх (пĕрремĕш çулхи кăларăм) Займ" укçине пухас ĕçе те вăйлатрĕç. Чурачăк йалсовечĕ 3-мĕш квартăлра займ укçи пухас плана 206,5 процент, Шетмĕпуç 116,8 процент, Хăймалакасси—124 процент, Тарăнçырма—112 процент тултарчĕç. Çак йалсоветсенче займ уполномоченнăйĕсем пурте пĕр-пĕринпе социалисăмлă ăмăртăва тухнă.

Районĕпе илсен укçа-тенкĕ пухас ĕç пур çĕрте те пĕр пек пымасть-ха. Хăшпĕр йалсоветсем ытла та йапăх ĕçленнипе район 3-мĕш квартăл планне 75,6 процент анчах тултарнă. Уйрăмăнах займ укçи пухас плана 57 процент çеç тултарнă. Чантăр, Йарапайкасси йалсовечĕсем виççĕмĕш квартăлшăн займ укçине пĕре те пухман. Йетĕрнекасси йалсовечĕ 22 процент, Йанăш йалсовечĕ 28 процент кăна тултарнă. Ку йалсоветсем Октăбер уйавĕ умĕнхи ăмăртăва хутшăнман.

Халех пур йалсоветсен те Октăбер уйавĕ умĕнхи ăмăртăва хутшăнса, умри ытти ĕçсене пурнăçа кĕртнипе пĕрлех, укçа-тенкĕ пухас ĕçре те пысăк çитĕнÿсем тумала.

Г. Шчербаков.

Выльăв укçи тÿлени

Кăçал 9 уйăх хушшинче Шупашкар хулинчи перекет кассисем государствă займĕсен тиражĕсем тата облигаци купонĕсем тăрăх пурĕ 188 пин тенкĕ тÿленĕ.

Вăл шутран ССР Сойузĕн оборонине тĕреклетмели займĕн йулашки тиражĕ тăрăх 6.102 тенкĕ тÿленĕ. Иккĕмĕш Пилĕкçуллăх (тăваттăмĕш çулхи кăларăм) займăн йулашки тиражĕпе 17.545 тенкĕ выльăв укçи тÿленĕ.

Октăбер уйавĕ умĕнхи ăмăрту

УКЕРЧĔК ÇИНЧЕ: Канашри вакунсем йусакан савăтри токăр Агафонăв йулташ. Вăл нормăна 250 процент таран тултарса пырать.

Бабайĕв фото-ÿкерчĕкĕ

Хапрăк коллективĕн пысăк çĕнтерĕвĕ

Шупашкарти предприйатисенчен чи малтан Октăбер уйавĕ умĕнхи ăмăртăва хутшăннă Деткомиссин хапрăкĕ октăберĕн 1-мĕшне çулталăкри плана 111,6 процент тултарса пысăк çĕнтерÿ турĕ. Хапрăк хăй туса кăларакан продукци хакне планра кăтартнинчен 11,41 процент чакарнă.

Хапрăк коллективĕ уйрăмăнах августпа çентăбер уйăхĕсенче пысăк çитĕнÿ турĕ. Вăл 2 уйăх хушшинче ĕç тухăçлăхне 54 процент тултарчĕ.

Производствă планне тултарас тĕлĕшпе чи малта çăматă йăвалакан цех пырать. Цех октăберĕн 1-мĕшне планран ытлашши 3.500 мăшăр çăматă туса кăларнă.

Пайанхи куна хапрăкра 60 стахановец йалан плана ытлашшипех тултарса ĕçлеççĕ. Комсомолецсем ленинла-сталинла комсомол 20 çул тултаракан чаплă кун йачĕпе çав тери паха тĕслĕхсем кăтартаççĕ. Сăмахран, Игнатйĕвпа Васильйĕв йулташсем кашни кунах нормăна 175—230 процент тултараççĕ.

Стахановла йухăма татах те вăйлатса пырса, хапрăк коллективĕ çак çулта планран ытлашши 6000 мăшăр çăматă, 1000 штук каткапичке туса кăлармалла пулать.

Лукинский.

Обйазательствăна пурнăçа кĕртеççĕ

ÇĔРПУ. Иванăври „1905 çул" колхоз членĕсем Аслă Октăбер уйавĕ умĕнхи социалисăмлă ăмăртăва тухса хăйсем çине татăклă обйазательствăсем илчĕç. Вĕсем октăберĕн 10-мĕш тĕлне укçа-тенкĕ, сĕт-çу, çăм, аш-какай тата ытти парăмсене йăлтах парса татма пулнă. Колхозниксем хăйсем çине илнĕ обйазательствăсене ăнăçлăн пурнăçа кĕртсе пыраççĕ. Октăберĕн 5-мĕш тĕлне пур колхозниксем те çăм, çу тата займпа налог укçине те парса татнă. Аш-какай обйазательствине 80 процент тултарнă.

К. Михайлăв.

Тупăшсене валеçме хатĕрленеççĕ

ПАТĂРЙЕЛ. Нĕркеч йалсоветĕнчи Шмидт йачĕпе тăракан колхоз авăн çапса пĕтернĕ хыççăн, аванс шучĕпе ĕçкунĕсем тăрăх колхозниксене 2-шер килограм тĕштырă тата 30-шар пус укçан валеçсе пачĕ. С. Красновпа Шербустанăв колхозниксем 200-шер тенкĕ ытла укçа илчĕç.

Колхозра хальд тупăшсене валеçме хатĕрленеççĕ. Малтанлăха шута илнĕ тăрăх, пĕр ĕçкунĕ çине 5 килограм тĕштырă тата пĕрер тенкĕ укçан валеçмеле.

Н. Краснов.

Строймастăрăн çапла ĕçлемеле-ши?

Канашпа Шупашкар хушшинчи чукунçул строительствин 81-мĕш километрти рабочисем чукунçула хăвăртрах туса пĕтерессишĕн кĕрешеççĕ. Анчах вĕсене кирлĕ чухне пулăшу, кăтарту паманни, руководительсем вĕсемпе час-часах курнăçса калаçманни ĕçре пысăк чăрмав кÿрет. Акă, тĕслĕхрен, строймастăрпа—Йермаченко йулташăн илер. Вăл рабочисем патĕнче питех те сахал пулать, ĕç вырăнĕсене кăтартса йĕркелемест. Хăш вырăнта мĕн, мĕнле ĕç тумаллине çаксене чылай рабочисем лайăх пĕлмеççĕ.

Рабочисен ĕç инструменчĕсем те çитмеççĕ. Çĕр чавакансен чылайĕшĕн тимĕр кĕреçе, хăйра, рашпиль, подпилкă çитмест т. ыт. те. Çаксем çинчен строймастăра каласан, вăл нимĕн чĕнмесĕр урăх çĕрелле уттарать. Çапла ĕçлесен ĕç ăçтан ăнăçлă пулса пытăр-ха!

А. Шорникăв.

Хветĕр Уйар

ИРТНĔ ТАПХĂР

(Калав)

Пĕр тĕтрелĕ кĕрхи ир Владивосток чукунçулĕ çинчи Кедровкă текен разйезд тĕлне хăмăшлăх йенчен пĕр çын тайкаланса тухрĕ. Унăн тумтирĕсем пĕтĕмпех çуркаланса пĕтнĕ. Вăл çара пуçăн, çара уран. Пичĕ-куçĕсем хĕнени хыççăнхи пек шыçăнса темиçе çĕртен висте тăраççĕ. Пыльчăклă урисенчен йун тухать.

Разйездра иккĕмĕш сехет ĕнтĕ пуйăс тăрать. Пăравуç вальди вутă хатĕрлеме тухнă пассажирсем халĕ çеç вакунсене кĕме тытăннă. Унта та кунта Йапони салтакĕсем курăнкалаççĕ. Халăх сахал мар пулин те, никам калаçни-кулни те илтĕнмест.

Çĕнĕ пассажир ÿсĕр çын пек тайкаланса чукун-çул линийĕ çине тухрĕ те, халăх тĕркĕшсерех тăракан кайри вакун патне пырса, пусма çине хăпарма тытăнчĕ.

Вакуна çĕн пассажир кĕрсе ларнине никам та асăрхăймарĕ.

Вăл, хăйне такам палласа илесрен шикленнĕ пек, тĕттĕмрех çĕре кĕрсе ларчĕ.

„Шутламасăртарах хăтлантăм пулас та ĕнтĕ, — хăй ĕшĕнчи темĕнле пăшăрханчăк туйăмне пусарма тăрăшса шутласа илчĕ Илле (çĕнĕ пассажир çак йатлă пулнă), — анчах урăхла тума май çук-çке: Грибовкă станцине, тата аялă çурăма, çурран утса йĕпеле те çитеймес çук ĕнĕ... Çулран çухалса çÿренйĕх пĕтерчĕ-çке те..."

Айалта пушă вырăнсем чылай пулин те, пассажирсенчен нумайĕшĕ Илле пекех тĕттĕмрех вырăнсене, çÿлти полкăсем çине вырнаçнă. Кашниннех тенĕ пек çурăмĕсем хыçĕнче пушă хутаçсем. Вĕсем вакун хускалмассеренех йĕритавра шиклĕн пăха-пăха илсе пĕр-пĕринчен айăккарах куçса ларассĕ.

Иллене хирĕç айалти полкă çинче тулăх питлĕ темĕнле ватă генерал çывăрать. Унпа йунашарах чăматансемпе тулли михĕсем çине хулари мешченесем йевĕр çи пуçлă çынсем ларнă. Вакун леш пуçĕнчи чÿрече çывăхĕнче вырăс офицерĕсем те Йапони салтакĕсем калаçса тăраççĕ. Урайĕнченех чĕлĕм тĕтĕмĕ йăсăрланать.

Илле пассажирсене вăрттăн сăнаса çаврăнни май, чÿрече çывăхĕнчи офицерсем çине пăхрĕ те, пĕрине пăхрĕ кăна куçма-куç тĕл пулчĕ.

„Ăнсăртран çеç пăхрĕ пулас вăл мана йенне, — халран кайса çитнипе кĕç-вĕç урайне чикĕнсе анас пек тайкаланса хăйне хăй йăпатрĕ Илле. — Епĕ кам иккĕнне мана çамка çине çырса хуман вĕт..."

Пĕр пилĕк-улт минута йахăн вăл чÿречерен вăскамасăр иртекиртекиртекирте йулакан йăвăçсем çине пăхкаласа пычĕ. Унтан урисене полкă çине çĕклесе стена çумне тайăнчĕ те, çывăрнă пек куçĕсене хупрĕ.

Вакунта чирăе çын пур пек сайра хутран çеç пăшăлтатса калаçни илтĕнет. Çÿлти полкăсем çинче хăйусăррăн ÿсĕркелесе илеççĕ. Илле выртсанах вакун тăрăх такам уткаласа çÿреме тытăнчĕ. Пĕр-икĕ хутчен вăл Илле выртакан тĕле çитсе чарăна-чарăна тăчĕ. Пăртакран ура сассисем вакун леш пуçĕнелле кайса илтĕнми пулчĕç. Такама чĕнме тухса каймарĕ-ши вăл?..

Вакунри пур сас-чĕвĕсене те çивĕччĕн итлесе выртакан Илле каллех тăрса ларчĕ те, малтан офицерсемпе салтаксен урисем çине пăхрĕ. Вĕсем пурте вакунрах иккен-ха. Унтан майĕпех куçĕсене хăпартса инçетрен пек çеç вĕсен пичĕсем çине пăхса илчĕ. Халĕ вĕсем калаçма чарăнсах пурте ун йеннелле пăхаççĕ.

Илле ĕç чĕрре кĕре пуçланине кура канăçсăррăн хускалкаласа илчĕ те, алăк çывăхнерех куçрĕ.

„Тытма шутлаççĕ пулас кусем, — темшĕн хăйĕн ĕлĕкхи вырăнне куçса ларчĕ Илле. — Чукунçул тăрăх çÿрекен контрразведкă пулмала ку..."

Пойăс кĕтмен çĕртенех хыттăн турттăнчĕ те, чарăнса ларчĕ. Пассажирсем васкаса тухма тытăнчĕç. Тĕркĕшпе уçă курса Илле те ура çине ан а тăчĕ. Анчах алăк йеннелле ик виç утăм та тăваймарĕ, ун умне Йапони салтакĕсемпе çуллахи кĕске курткине тăхăннă вырăс офицерĕ тухса тăчĕç.

— Есĕ кам? — терĕ вăл, аллине Илле хулĕ çине хурса. — Кăтарт-ха документсене. Н-ну!..

Илле офицер аллине хăй çинчен илчĕ те, пăртак кайала чакрĕ. Унтан темĕн шырнă пек пулса аллине кĕсйине чикрĕ;

„Кунтан хăтăлаймасан... кансĕр пулать"...

Вăл сасартăк наганне туртса кăларчĕ те... хыçалтан такам çапнипе урайне персе анчĕ. Алăксене хупса лартрĕç.

— Н-ну! — терĕ офицер каллех. — Кам пулатăн-ха есĕ? Шпион-и? Партизансен разведчикĕ-и?..

Илле пĕрре хăйĕн наган тытнă алли çине пусса тăракан офицер çине, тепре халĕ кăна пырса тăнă генерал çине пăхса илчĕ те, нимĕнле суйса та усă пулас çуккине курса, шăлĕ витĕр чăрт! кăна сурса парахрĕ.

Генерал сасартăк хĕрелсе кайрĕ.

— Ку кам? — çаврăнчĕ вăл офицер йеннелле. — Сире ун пеккисемпе çапла сăмах ваклаper тăма хушнă! Персе пăрахас пулать вĕсене пурне те...

Офицер айаккăла пăрăнсанах генерал Иллене тула сĕтĕрсе тухрĕ...

Пĕчĕк полустанкăри çуртпа юнашăр ... пахча картисем тĕтрепе хупланса курăнми пулчĕç. Пойăс ытти станцисенчи пекех пĕр сас-чÿ тумасăр кускаласа кайрĕ. Вĕсем темĕнле типĕ вара çитсе кĕчĕç. Тасата шыв шăнкăртатса йухни тата хăмăшсем чăштăртатни илтĕнет. Илле пĕр вăхăта йăвăр ĕç тунă пек тарласа хăйне тайга йăшеле сĕтĕрекен генерал çине тĕлĕнсе пăхса пычĕ. Асăплă çулла вакунти ĕçсем ăна пĕтĕмпех аптратса халран йачĕç. Ниушлĕ çакнашкал сарăмсăр вĕçленĕ-ши вăра пурнăç?..

Çăра чăтлăх хĕррине çитсен вăл хăйне персе пăрахма илсе каякан генерала чунхавалĕпе хирĕçсе сасартăк йăлăнтарса йачĕ. Унтан ăна пăвма хăтланса сухалĕнчен тытрĕ те, тăнран кайас пек тĕлĕнсе кутăн кайса ларчĕ. Генерал сухалĕ хыттăн тытнипе тĕпĕ-тымарĕпех ун аллине тăрса йулчĕ. Вăл ĕлĕкрех шуррисен тылĕнче ĕçлеме йанă партизан отрйачĕн командирĕ Бурăв.

— Ме наганна, — терĕ вăл, сăмах тупаймасăр тĕлĕнсе ларакан Илле çине куларăххăн пăхса. — Есĕ ăна пайанхи пек çăмăллăнах туртса ан кăлар... Тĕлĕнсе ларатни? Нимĕн тĕлĕнмели те çук, йулташăм. Епĕр нумайăн кунта. Кĕçех ак сана та пĕр-пĕр чин парăпăр. Тăшмана çапла чейеленсе шăлтан аркатас пулать ăна...

Ку ĕç 1921 çул кĕркунне Инçет-Хĕвелтухăçĕ çине тапăнакан Йапони интервенчĕсене хирĕç талккишпе наступлени пуçланă вăхăтра пулса иртнĕ.

∴

Çак калава пире, призыв пунктне пуçтарăннă çамрăксене, ĕнер ирхине ватă командир Çтепанăв йулташ каласа пачĕ.

— Çапла ĕçленĕ ун чухне сирĕн асусем тăшман тылĕнче, — тесе вĕçлерĕ вăл хăйĕн калавне.

— Малала мĕн пулнă, командир йулташ? Бурăвпа Илле кайран ăçта кайнă? — терĕ пиреэнтен пĕри.

Калавçă тенкел çинчен çĕкленчĕ те, йунашар пÿлĕмĕн алăкне уçрĕ.

— Малала мĕн пулни çинчен Илья Петровичран хăйĕнчен ыйтăр, — терĕ вăл, икĕ орденлă ватă врач çине кăтартса. — Вăл сире тĕплĕнрехех каласа пама пултарать.

Икĕ колхоз çеç кĕрхи çĕртме тунă

Кĕрхи çĕртме тумали паха вăхăтсем иртсе кайрĕç. Халăх Комиссарĕсен Совечĕ йышăннă тăрăх, октябĕрĕн пĕррремĕш тĕлне пур вырăнсенче те кĕрхи çĕртме туса çитермеле пулнă. Çакна Йетĕрне районĕнчи икĕ колхозсăр пуçне („Пионер", „Прогресс") пĕри те пурнăçа кĕртмен. Октябĕрĕн 3-мĕшне илсен, районра кĕрхи çĕртме тума пăчах тухман колхозсем те пур. Акă, Палтайри Буденный ячĕпе тăракан колхозпа (председателĕ Мышкина) Курскинчи „Воля" (председателĕ Çидăрав) колхозсем кăçал кĕрхи çĕртме тума пачах шутламан. Хăшпĕр колхозсенче агротехникăна пăсса пыраççĕ. Вăрманкас, Йадрино, Пырсырлан колхозĕсенче 20—22 сантиметр таранĕш сухалас вырăнне 10—12 сантиметр таранĕш, çийелтен шăйăрттарсa çеç хăвараççĕ.

Машинă тракторла станцийĕнче те кĕрхи çĕртмене вăхăтра туса пĕтерес пирки çине тăрса кĕрешмĕ пулман. Договăр тăрăх, МТ Станцин 4.800 гектар кĕрхи-çĕртме туса хăвармала пулнă, паянхи куна 1.500 гектар çеç сухаланă.

Ник. Цветков.

Йеднноличниксем колхоза кĕреççĕ

ЙЕТĔРНЕ. Районра ССР Союзĕн Верховнăй Совечĕн Иккĕмĕш Çеççийĕ йышăннă решенийĕсем çинчен ĕççынисене ăнлантарса пама тытăннăранпа 92 хуçалăх колхоза кĕнĕ. Вăл шутран Пырсырланти Ворошилăв ячĕпе тăракан колхоза 13 хуçалăх, Чурпайри Кирăв ячĕпе тăракан колхоза—7 хуçалăх, Кăкшăмри Ильич ячĕпе тăракан колхоза 11 хуçалăх кĕнĕ. Хаљ çеç колхоза кĕнĕ хуçалăхсене Октябĕр уйавĕччен йалхуçалăх ĕççене ăнăçлăн вĕçлесе çитерес тĕлĕшпе тăрăшса ĕçлеççĕ.

Ник. Ц—в.

ВĂРМАР. ССРС, РСФСР тата Чăваш АССР Верховнăй Совечĕсене суйлани вăхăтра агитатăр пулса ĕçленĕ коммунистсемпе комсомолецсем хаљ те агитаци ĕçне вырăнсенче анлăн туса пыраççĕ. Арапуçĕнчи агитатăрсем ССРС Верховнăй Совечĕн Иккĕмĕш Çеççин историлĕ решенийĕсем çинчен ĕççынисене ăнлантарса панă май 8 хуçалăх колхоза кĕчĕç.

В. С. Алендейĕв.

КАНАШ. ССРС Верховнăй Совечĕн Иккĕмĕш Çеççийĕ пулса иртнĕренпе Каракăл, Вăрăмпуç, Çĕнĕ Першенер, Кармали, Асхва йалсовечĕсенчи колхозсене 83 хуçалăх çĕнĕрен кĕнĕ.

И. Федăрав.

ВĂРНАР. Çак кунсенче Йермошкинă, Булатăвă, Йĕрĕпуç, Аватпас, Кăмаша тата „Çĕнйал" колхозĕсене пурĕ 65 хуçалăх колхоза кĕме заявлени панă. Хаљĕ вĕсене пурне те колхоза илнĕ.

Ник. Козлов.

Утартан 7.337 тенкĕ тупăш илнĕ

Иамаш колхозĕ (Çĕрпÿ р.) хуртхăмăр усрама 1932 çултах тытăннă. Малтанхи çулне утарта 17 вĕлле çеç пулнă, хаљĕ 131 вĕллене çитнĕ. Кăçал колхоз утартан 2 тонна та 223 килограм пыл, 79 килограм шăларах ăвăс илнĕ. Ĕçкунĕ тăрăх колхозниксене 1 тонна та 743 килограм пыл валеçсе панă. Государствăна панă хыççăн тата валеçнĕ хыççăн йулнине колхоз пасара илсе туса 7.337 тенкĕлĕх сутнă.

Утарта 13 çын ĕçлет, вĕсем пурте районри колхоз шкулĕнче вĕренсе тухнă.

Утар хаљĕ хĕле кĕме лайăх хатĕрленсе пырат. Хуртсем валљи апат-çимĕç çителĕклĕ.

А. Иванов.

Ăшшăн кĕтсе илчĕç

Командир Салăв йулташ-йертсе пыракан № авиачаçе кăçалхи призыва Рабочисемпе Хресченсен Хĕрлĕ флотне илнĕ çамрăксем—Октябĕр тантăшĕсем пычĕç. Вĕсене командирсем, политработниксем, красноармейецсем—вĕренÿре отличниксем ăшшăн кĕтсе илчĕç.

Часĕ территорине партипе правительствăн руководителĕсен сăнĕсемпе, ÿкерчĕксемпе, лозунгсемпе праçник чухнехи пек илемлетнĕ. Алăк умĕнче: „Привет новому пополнению Рабоче-Крестьянской Красной Армии", текен лозунг илемлĕн курăнса тăрат. „Урра" тенĕ сасă хăвăслăн янăрат.

Призывниксем пурте çирĕп сывлăхлă, нумайăшĕ вĕренĕкесем. ПСК(б)Парти членĕсемпе комсомолецсем те иртнĕ çулхисенчен нумайрах. Чылайĕшĕ Хĕрлĕ Çар ретне пыриччене авиаци ĕçне вĕреннĕ. Акă призывник В. Щеглов йулташ производствăран уйрăлмасăр пилотсен шкулĕнче вĕренсе тухнă. Хăй тĕллĕн вăл 120 сехет вĕçнĕ, производствăра та кăтартуллă ĕçленĕ, кашни уйăхри планне 180—240 процент тултарса пынă.

П. Ивлĕв йулташ техникумра вĕренсе туса технолог-конструктăр пулса ĕçленĕ. Хĕрлĕ Çар ретне пынă ытти çамрăксем те ĕçре, вĕренÿре пиçĕхсе ÿснĕ патăрсем. № авиачаçе пынă çамрăксем валљи вĕренсе хăйсен пĕлÿлĕхĕсене ÿстерме кирлĕ майсене пурне те туса панă. Вĕренÿ хатĕрĕсем, классем пурте хатĕр. Хĕрлĕ Çарти кашни красноармеец хаљ пĕр шухăшлă пулса вăрçа техникине вĕренет, социализмлă тăван çĕршыва сисĕмлĕн те çивĕччĕн сыхлат.

П. Улайĕв.
Ф. Андрейĕв

ÿКЕРЧĔК ÇИНЧЕ: Лепешинский ячĕпе тăракан 32-мĕш номĕрлĕ шкулта 4-мĕш „А" класра вĕренекенсем Марина Розенцвайг (сулахайра) тата Çергей Шоловский уроккра (Мускав).
Л. Дорденский фото-ÿкерчĕкĕ (Союзфото).

Йетĕрне педучилищинче

Йетĕрнери педучилищă иртнĕ вĕренÿ çулĕнче Чăваш республикĕнчи 8 педучилищă хушшинче 1-мĕш вырăна тухрĕ. Çулахи вăхăтра та студентсен лагерĕнче Йетĕрне педучилищинчи студентсем пĕлÿлĕх тата активлăх йенчен чылай малта тăни паларчĕ. Çакна шута илсе педучилищă кăçал тата пысăкрах çитĕнÿсем тума ĕмĕтленет.

Училищăра кăçал 533 ача вĕренет, 14 клас. Иртнĕ çул хăшпĕр предметсемпе преподавательсем çитмесчĕç. Кăçал преподавательсем çителĕклĕ.

Вĕренÿ пахалăхне хăпартас тĕлĕшпе студентсем хушшинче социализмлă ăмăртăва анлăн сарса йанă. Класпа клас, студентпа студент хушшинче ăмăртÿ договăрĕсем çирĕплетнĕ. Училищă Шупашкарти педучилищăна ăмăртăва чĕнме йышăннă.

Комсомол организаци ÿссе пырат. Кунта пĕтĕмпе 101 комсомолец. Кунсăр пуçне профсоюза тата Осоавиахим организацийĕсем пур.

Студентсем библиотекăри кĕнекесемпе пысăккăн усă курассĕ. Библиотекăра Маркс, Енгелљс, Ленин, Сталин произведенийĕсем, учебниксем, классикла литература çителĕклĕ. Кăçал библиотекă валљи тата 50 пин тенкĕлĕх çĕнĕ кĕнекесем туйанна.

Училищăра физика, хими, биологи, педагогика, географи кабинечĕсем тата музей организациленĕ. Ку вĕренÿ ĕçĕнче калама çук пысăк вырăн йышăнса тăрат. Çавăнпа пĕрлех тата вĕренÿ материалĕсене кино-екран çинче кăтартса тĕплĕн ăнлантарса параççĕ.

Вĕренÿ çулĕ пуçлансанах студентсем пуçарнипе литературă кружокĕ, фото, радио, оркестр, хор тата ПВХО кружокĕсем ĕçлеме тытăнчĕç.

Хаљĕ училищă ленинла-сталинла комсомол 20 çул тултарнине кĕтсе илме хатĕрленет. Студентсем çамрăксен мухтавлă та аслă уявне отличнă вĕреннипе тата сывлăх значокĕсем илнипе парнелеме ĕмĕтленеççĕ.

Н. Корĕв—Сакăт.

Çыхăнусăр çыхăну ĕçĕ

Совет Союзĕн столици—Мускав—Вăрнартан 624 километрта ларат. Апла пулин те Мускавра тухнă хаçатсене Вăрнар ĕççынисем тепĕр кун ирех илсе вулаççĕ.

Октябĕрĕн 3-мĕшĕнче ирхине 8 сехет иртсессĕн почтаљон октябĕрĕн 2-мĕшĕнче тухнă „Правда" хаçата пырса пачĕ. Анчах çав кун тухнă республикăри хаçатсем çаплах çитеймен-ха. Вăрнарпа Шупашкар хушши 80 километр çеç пулин те, хаçатсем подписчиксем патне 2-мĕш—3-мĕш кун тин çитеççĕ.

Шупашкар та Мускав пекех аякра пулсан, республикăри хаçатсене 7—8 кунсăр илсе вуласшăн ĕмĕтлен.

Акă паян та, октябĕрĕн 4-мĕшĕнче, „Чăваш Коммунĕ" тата „Красная Чувашия" хаçатсем, октябĕрĕн 3-мĕшĕнче тухнисем, ирхи пуйăспа та, кăнтăрлахипе те çитеймерĕç. Çĕрлехи пуйăспа çитсессĕн вара çеç вырăн ирхине, октябĕрĕн 5-мĕшĕнче тин вулама пултаратпăр.

Радио ĕçленĕ чухне çĕнĕ хыпарсене хаçат иличчен малтан пĕлетпĕр.

Халăхшăн хаљ хаçат, радио тата кино сывлăш пекех паха. Етем сывлăшсăр пĕр минут та пурăнаймаст, çавăн пекех хаçат-журналсăр, радиосăр, киносăр та пурăнма йывăр.

Шупашкарти почтă тата хаçатсен издательстви хăçан хăйсен ĕççисене кирлĕ пек йĕркелĕç-ши?

Д. Обофорав.

Çĕнĕ клуб усăлла йатпа

Мăн Иваншри (Хĕрлĕ Чутай р.) Сталин ячĕпе тăракан колхозăн çĕнĕ клубĕнче çак кунсенче „Комсомольск" йатлă кино-картинă кăтартрĕç. Кино курма тавраri колхозсенчен те çынсем нумай килчĕç.

Колхозник-стариксем тĕлĕнсе картинăна савăнса пăхрĕç, ăна ырларĕç.

Ф. Çеменăв.

Йалти хĕрарăмсем

Октябĕр револуци пулнăранпа пирĕн çĕршывра хĕрарăмсен пурнăçĕ тĕпрен улшăнчĕ, кулљтурлăхĕ ÿсрĕ. Сталинла Конституци хĕрарăмсене арçынсемпе пĕртан права парат. Йалти хĕрарăмсем хаљĕ государствă ĕçĕсене активлăн хутшăнаççĕ. Колхозра хĕрарăмсем—пысăк вăй пулса тăчĕç. Вĕсем колхоз производствинче ответлă участкăсенче ĕçлеççĕ, колхозсене болљшевикла ĕçлекен, колхозниксене пуйан та кулљтурăлă пурăнакан тăвассишĕн вăйлăн кĕрешеççĕ.

Совет çĕршывĕнчи хĕрарăмсен пурнăçĕ аванланса пынине Çиçĕмкасси йалĕнчи (Йĕпреç р.) „Çиçĕм" колхозри хĕрарăмсен пурнăçĕнчен те аванах куратпăр.

Çиçĕмкасси йалĕ 1920 çулта пуçланнă. Кунта вăл вăхăтра çырма, вулама пĕлекен хĕрарăм пĕрре те пулман. Хĕрарăмсем общчĕствăлла ĕççене, пухусене хутшăнса курман. Хĕрарăмăн тĕп ĕçĕ—кăмака умĕнче пулнă.

1927 çулта йалта колхоз организацилеççĕ. Çакăн хыççăн хĕрарăмсем çĕнĕ вăйпа ĕçлеме пуçларĕç. Колхоза организаципе хуçалăх йенчен çирĕплетессишĕн хĕрарăмсем болљшевикла хастарлăхпа ĕçлеме пуçласçĕ. Уйрăмах кунта Александра Красильникăвă йулташ палăрса тăрат. Вăл çак хушăрах коммунистсен парти ретне кĕме хатĕрленет. Хĕрарăмсемпе ывăнма пĕлмесĕр ĕçлет, вĕсен кулљтурлăхне, активлăхне ÿстерессишĕн тăрăшат.

Йалта хут пĕлменнисене вĕренме ликпункт уçрĕç. Хут пĕлмен хĕрарăмсем ликпункта çÿресе 1936 çулта пурте хут пĕлекен пулчĕç. Хĕрарăмсем хаçат-журнал çырăнса илсе вулама пуçларĕç. Вĕсен йурăтă журналĕ—„Ĕçхĕрарăмĕ".

ССРС, РСФСР тата Чăваш АССР Верховнăй Совечĕсене суйлавĕ вăхăтĕнче хĕрарăмсенчен пахă агитатăрсем, пропагандистсем ÿссе çитĕнчĕç. Ку шутра уйрăмах Дарийа Кандикăвă йулташ палла вырăнта тăрат. Вăл ССРС Верховнăй Совечĕне суйлавĕ вăхăтĕнче агитатăр пулса ĕçлерĕ. Кандикăвă РСФСР тата Чăваш АССР Верховнăй Совечĕсене суйлана вăхăтра округ суйлав комиççин членĕ пулса ĕçлерĕ.

1935 çулта Кандикăвă йулташ Горький хулинче колхозник-ударниксен сљочĕнче пулнă. Унта вăл Калинин йулташпа тĕл пулнă. Калинин йулташа пĕтĕм йалти хĕрарăмсен ячĕпе тĕрленĕ кĕпе панă.

— Ĕлĕкхи вăхăтра епĕр кăмака умĕнчен туха курайман. Совет влаçĕ пире, хĕрарăмсене, çутă, телейлĕ пурнăç туса пачĕ. Сљотра Калинин йулташпа тĕл пулнине епĕ вихăçан та манас çук. Унăн хаклă сăмахĕсене йаланах асра тытатăп, пурнăçа кĕртсе пыратăп,—тет Кандикăвă йулташ.

Кандикăвă йулташ колхозра паллă хĕрарăм пулса тăчĕ. Вăл ĕне ферминче 4 çул ĕçленĕ, уйхир бригадирĕ те пулнă. Кандикăвă комсомолка. Хаљ партине кĕме заявлени панă.

Кандикăвă йулташ пек паттăр хĕрарăмсем Çиçĕмкассинче вуншарăн шутланаççĕ. Вĕсем колхоз производствинчи уйхир маçтăрĕсем. Общчĕствăлла ĕççене активлăн хутшăнаççĕ. А Симбирскайă, А. Орлова, М. Федăрăвă йулташсем—йалсовет членĕсем. Вĕсем йалсовет ĕçне активлăн хутшăнаççĕ. Марийа Федăрăвă, Вăрвара Петровă звеноводсем пулса ĕçлерĕç. Вĕсен звенисем тырпула пухса кĕрес ĕçре мала тухнă. Анфиса Орлова колхозра счетоводра ĕçлет.

Колхозра хĕрарăмсем пысăк вăй пулни çакăнтан та аванах курăнат. 1937 çулта „Çиçĕм" колхозра арçынсем 17016 ĕçкунĕ ĕçленĕ, хĕрарăмсем 12719 ĕçкунĕ тунă. Кăçал арçынсем 10267 ĕçкунĕ тунă, хĕрарăмсем 7828 ĕçкунĕ.

Колхозри ответлă вырăнсенче 8 хĕрарăм ĕçлет. Вĕсем ĕçре паха тĕслĕхсем кăтартаççĕ.

Раиса Иванова йулташ 3-мĕш çул ĕнтĕ фермăра дойаркăра ĕçлет. Ĕнесене йуратса пăхат, вăл пăхакан ĕнесем сĕт нумай параççĕ. Ăна кăçал выçăх-чĕрлĕх йĕрчетес ĕçпе ĕçлекенсен республикăри сљочĕнче çĕнĕ çĕлемели машинă парса премиленĕ.

Çиçĕмкасси йалĕнчи хĕрарăмсем телейлĕ те савăнăçла пурнăç тупса паракан Сталин йулташа чĕререн тав тăваççĕ.

„ССР Союзĕнче хĕрарăма пĕтĕм хуçалăх, государство, кулљтурă тата общĕствăпа политика пурнăçĕнче арçынна пĕртан правасем панă.

Хĕрарăмсен çав прависем пурнăçа кĕресси—хĕрарăма ĕçлев, ĕç укçи тÿлевĕ, канăç, социаллă страховани тата вĕренÿ тĕлĕшĕсемпе арçынпа пĕртан права панипе, амăшĕне ача интересне государствă сыхласа тăнипе, йăвăр çын хĕрарăма ĕçукçи тÿлесех отпуск панипе, ача çуратмалли çуртсем, ача йаслисемпе сатсем нумай уçнипе—пулса пырат" (ССРС Конституцин 122 статйи).

Çак статйа хĕрарăмсен прависене сыхлат. Çакă вăл партипе правительствăн, Сталин йулташ хĕрарăмсемшĕн тăрашнине кăтартат. Çиçĕмкасси йалĕнче Сталинла Конституцин 122-мĕш статйине кашни хĕрарăм пĕлет, вăл статйа кунта пĕтĕмпех пурнăçа кĕрсе пырат.

Дм. Михайлăв.
Гл. Марушĕв.

Йалхуçалăх ĕçĕсем вĕçленеççĕ

КАНАШ. Вăрăмпуçĕнчи „Коминтерн" колхоз 1938 çулти йалхуçалăх çулне анăçлăн вĕçлесе пырат. Уйри тырпулсене вăхăтра пустарса кĕртсе çанталăк тинĕ тăнă вăхăтрах авăн çапса пĕтерчĕ. Уй ĕçне тунă çĕрте 3—4-мĕш бригадăсем мала тухрĕç. Хаљ колхозра тупăшсене валеçме хатĕрленеççĕ.

Бригадирсем хăйсен бригадисенчи колхозниксен ĕçкунĕсене тепĕр хут тĕрĕслесе шута илчĕç.

„Коминтерн" колхоз Октябĕр уйавне уменех ăмăртăва хутшăнчĕ. Колхоз уйавччен 40 пуç ĕне валљи çĕнĕ вите туса пĕтерет.

С. Филиппăв.

Пусуçавăрнăш ĕçĕнче пулнă сăтăрла ĕççен йулашкийĕсене пĕтерес ыйту пирки

Мĕншĕн пире пусуçавăрнăш кирлĕ

Тырпул тухăçне ÿстерес ĕçре пусуçавăрнăшĕ питĕ пысăк вырăн йышăнса тăрат. Çак ыйтăва тĕплĕн сÿтсе-йавса колхоз тĕрĕс пусуçавăрнăш çине куçса ĕçлеме тытăнсан, колхоз уйхирĕнче çумкурăксем те сахалланса йулаççĕ, тырпул тухăçĕ те нумай ÿссе колхозниксем валљи те, государствăна пама та тырă çителĕклĕ пулат тата выљăх-чĕрлĕх валљи апат та кирлĕ таранах пулма пултарат. Çавăнпа та халăх тăшманĕсем çак ĕçре ытларах сăтăр туса пынă. Тĕрĕс мар пусуçавăрнăшпе ĕçлесен, паллах, тырпул тухăçне ÿстерес ĕçре пысăк чăрмав пулса тăрат. Калăпăр, колхоз уйхир тăприне лайăхлатасшăн, çумкурăксене пĕтересшĕн тăрăшат, анчах йурăхлă мар пусуçавăрнăшĕ пĕтĕмпех çавна хирĕçле ĕç туса пырат: уйхире ытларах та ытларах çумкурăкĕ пусса илет, тăпра тытăмĕ йапăхланат, тырпул тухăçĕ çултан çула сахалланса пырат, йулашкинчен, çав май ĕçкунĕн хакĕ те йÿнелет.

Паллах, тĕрĕс пусуçавăрнăшĕ çине куçнă хыççăн та, пирĕн лайăх пусуçавăрнăш, ĕçлемесĕрех ĕнтĕ тырпул лайăх пулат, тесе алла хуçлатса ларма мар. Тĕрĕс пусуçавăрнăшпе ĕçлеме тытăнсан та колхозăн агротехникăлла ĕççене лайăхрах та анлăн туса иртерес тĕлĕшпе, уйхире çемçетес ĕçе тĕплĕрех тăвас тĕлĕшпе нумай ĕçлемелле пулат. Колхозăн çакна пĕлмелле: тĕрĕс пусуçавăрнăш çине куçнă хыççăн агротехникăлла ĕççене мĕн таран ытларах пурнăçа кĕртсе пыратăн, çав ĕççен усси çавăн таран пысăкрах пулса пырат.

Тĕслĕхрен, Тутаркас районĕнчи „Хĕрлĕ паттăр" колхоза илер. Ку колхоз 9 уйлă пусуçавăрнăш çине куçса ĕçлет: 2 уй кĕрхи тырăсем, 2 уй—çурхи тырăсем, 2 уй—клевĕр, 1 уй—тымарçимĕçсемпе пăрçалă кулљтурăсем, 2 уй—çĕртме йышăнат. Çав пусуçавăрнăш çине пĕтĕмпех куçса çитнĕренпе колхозăн тырпул тухăçĕ çултан çула ÿссе пырат. 1937 çулта тырпул тухăçĕ йенĕпе ку колхоз районра пĕррремĕш вырăн йышăннă. Кăçал колхоз кĕрхи тырăсем йенĕпе гектартан 23-шер центнĕр илнĕ, çав май ку колхозра кăçал та ĕçкунĕ пуçне 5—6 килограм тĕштырă тивет.

Тырпул тухăçĕ мĕнле пуласси çанталăкран килмеле ан пултăр, уйхир пысăк тухăç паракан пултăр тесен, уйхир тăпри лайăх тытăмлă, вĕтĕ мăклашкалă, çумкурăксенчен таса пулмала. Унсăр пуçне тата тăпра ăшĕнче тырпул калчисене ÿсме кирлĕ йапаласем çителĕклĕ пулма кирлĕ. Пирĕн уйхир тăпри хаљ, пуринчен ытла пусуçавăрнашсене пăтраштарса пăрахнă колхозсенче, ытлашшипех кăлленсе кайнă тата уйсене çумкурăксем пуссе илнĕ. Пирĕн уйхир тăприне тĕпренех йусаса лайăхлатмала, çанталăк кирек мĕнле пулсан та пысăк тухăç паракан тумала.

Уйхире мĕнле майсемпе лайăхлатма пулат-ха? Тĕрĕс пусуçавăрнăш çине куçса ĕçлесен тырпул тухăçĕ ÿсни мĕнрен килет-ши? Тÿрех каламалла, уйра нумай çул ÿсекен курăксем пулни тата тырпулсем тĕрĕс ылмашса акăнса пыни çав ĕçре чи паллă вырăнта тăраççĕ.

Кĕлленсе кайнă тăпра тусан пек вĕтĕ пайсенчен тытăнса тăрат. Тăпрана лайăх тытăмлă тăвас тесен, çав тусан пек вĕтĕ пайсене çыхăнтарса вĕтĕ мăклашка пулса тытăнса тăракан тумала. Вăл ĕçе нумай çул ÿсекен курăк тымаррисем çеç лайăх тума пултараççĕ. Курăк тымаррисем тăпрана пур йенчен те шăтарса тăрса, кайран (çерем çĕтнĕ хыççăн) çĕрсе çĕрĕк тăпри пулса (çав шутпа клевĕр уйне кĕркунне сухалама кирлĕ) тăпран тусан пек вĕтĕ пайĕсене пĕр-пĕрин çумне çыпăçтарса тăпрана вĕтĕ мăклашкалă туса хăвараççĕ. Çавăн чухне тата уйа навĕç (гектар çине 3—4 тонна таран) йе нумайрах кĕл, фосфорит çăнăхĕ (10—15-шер центнĕр йе ытларах) кăларсан, çав вĕтĕ мăклашкасем татах та çирĕпрех пулаççĕ, вара тăпра лайăх тытăмлă пулса йулат, нумай вăхăт хушши пысăк тухăç паракан пулат.

Кунсăр пуçне тата пăрçалă ÿсентăрансен тымаррисем (клевĕр вĕсен шутне кĕрет) тăпрана азот йенчен пуйанлатса хăвараççĕ. Çавăнпа та, клевĕр хыççăн фосфăр çăнăхĕ тата кали тăварĕ хывсан, тăпра ăшĕнче калчасене ÿсме кирлĕ пур йапаласем те çителĕклĕ пулса йулаççĕ. Куш çумне тата çакна калама кирлĕ: уйхир тăприне тĕпренех лайăхлатас тĕлĕшпе çумкурăксенчен те тĕплĕн тасатса çитерес шутпа, тĕрĕс шутланакан кашни пусуçавăрнăшĕнче пĕр уй таса çĕртме уйĕ пулса выртмала.

Пусуçавăрнăшсене пăтраштарас шутпа халăх тăшманĕсем мĕнле ĕçленĕ

Тырпул тухăçне ÿстерес ĕçре пусуçавăрнăшĕ мĕнле пысăк вырăн йышăнса тăнине лайăх пĕлсе тăрса, халăх тăшманĕсем çав ĕçре пит нумай сăтăрла ĕççем туса пынă. Чи малтанах вĕсем, тĕрĕс пусуçавăрнăш тесе, колхозсене нумай çул ÿсекен курăк акмала мар 4, 5, 6 тата 7 уйлă пусуçавăрнăшсем çине куçса ĕçлеттернĕ. Ун пек пусуçавăрнăшсемпе нийепле те тырпул тухăçне ÿстерсе пыма çук, ун пек чухне уйхирсем çумкурăкланса çеç пыраççĕ.

4 уйлă пусуçавăрнăшсене республикăра 11 колхозра йышăнтарнă, 189 колхозра 5 уйлă пусуçавăрнăшĕ, 7 уйли—70 колхозра пулнă. Курăксăр пусуçавăрнăшсем 291 колхозра, пурĕ 155 пин лаптăк çинче пулнă. 47 колхозра нимĕнле пусуçавăрнăшĕ те пулман. Вăл колхозсенче пусуçавăрнăш йĕрки вĕтĕмпех пăтранса кайнă. Йетĕрне МТС аслă агрономĕ Лепешкин йулташ каласа панă тăрăх, çавăн пек колхозсенче агрономсем мар, колхоз председателĕсем хăйсем те хăйсен уй йĕркине тупса çитерейменçĕ. Çавăн пирквиех, Чербай-ри колхоз председателĕ çуракки вăхăтĕнче 80 гектар таран çĕр сухатса хăварнă.

1300 колхозра халиччен йышăннă пусуçавăрнăшсене килĕшÿлĕ темеле. Пусуçавăрнăшсене нумай çул ÿсекен курăксене те кĕртнĕ пулнă. Анчах та халăх тăшманĕсем çав пусуçавăрнăшсене те йĕркеллĕ пурнăçа кĕртсе çитерме паман. Ака планне панă чух пусуçавăрнăшсен лаптăкне шута илмен, тĕштырă çине тĕштырă акса пымала план парса тăнă. Тутаркас районне илер. Кунта колхозсенче йышăннă пусуçавăрнăшсенчи уй лаптăкне илсен, 1933 тата 1934 çулта кĕрхи тырăсене пурĕ 13.011-шар гектар, 1935 çулта—10.367 гектар, 1936 тата 1937 çулсенче 10.354-шар гектар акмала пулнă. Района кĕрраки планĕ çапла парса тăнă: 1933 çулта 13.520 гектар, 1934 çулта 13.862 гектар, 1935 çулта 11.650 гектар, 1936 çулта 11.870 гектар, 1937 çулта 10.450 гектар. Уйрăм кулљтурăсем тăрăх илсен пăтраштарни татах та ытларах пулнă.

Çавăн пек пăтраштарусем кашни районрах пулса пынă. Урапакасси колхоз председателĕ (Йетĕрне районĕ) Йефимăв йулташ каланă тăрăх, хăшпĕр çулсенче акса пĕтерне хыççăн та ÿстерсе çĕнерен план пани пулнă. Çавăн пирки вара курăксем акăнмасăр йулнă, çуртри хыççăн çуртри йе тепĕр чух ыраш хыççăн ыраш акма лек пулнă. Паллах, йышăннă пусуçавăрнăшĕнчен нимĕн те йулман.

Чăваш АССР Çĕрĕç Халăх Комиссариачĕ республикăра йышăннă пусуçавăрнăшсен лаптăкĕпе килĕшмен заданисене крайри çĕр ĕç управленийĕнчен илсе тăнă. Çĕрĕç Халăх Комиссариачĕ кашни çулах крайран панă задани мĕн чухлĕ пулнă, çавна районсем тăрах валеçсе парса тăнă. Пусуçавăрнăшĕпе пăхнă лаптăкран план тăрăх панă лаптăк 9,2 пинрен пуçласа 22 пине çити ытлашши пулнă. 1938 çулта та çуракки планне панă чух 6 пин гектар ытлашшипе панă.

Халăх тăшманĕсем çакăнта калана ĕçсемпех чаранса тăман. Темĕнле хăтлансан та колхозсен уйхирĕнче клевĕр акнă лаптăксем пулĕç тесе, Çĕрĕç Халăх Комиссариачĕн тăшманла руководстви (Васильĕв, Йурйĕв, Çпиридонăв, Павлăв) клевĕр акмали нормăна гектар çине 4 килограма çити пĕчĕклетсе актарнă, çитменнине тата тимофейĕвкăпа та хутшăнтарма хушман. Çав нормăпа акнă вырăнта, паллах, клевĕр пит сайра пулнă, тепĕр чухне пачах шăтмасăр йулса тепĕр çулне вăл вырăна тĕштырă акмала пулса тăнă. Çав май вара каллех пусуçавăрнăшĕ пăтранса пынă. Тимофейĕвкăсăр акнă вырăнсенче малтанхи çул çеç ути пулнă, иккĕмĕш çулне клевĕр пачах сайраланса йулнă.

Çĕрĕç Халăх Комиссариачĕн кивĕ руководстви колхозсем çĕнĕ пусуçавăрнăш çине куçнă чух çĕр йĕркелес ĕçре пулăшу памалла мар туни те сăтăрла ĕçех пулса тăрат. Вăл çеç те мар, колхозсенче сÿтсе-йавса çĕнĕ пусуçавăрнăш çине мĕнле куçмалли çинчен те ăнлантарса парасшăн пулман.

Çĕрĕç Халăх Комиссариачĕ йенчен кирлĕ мар çĕртенех йышăннă пусуçавăрнăшсене улăштарни те нумай пулнă. Мĕншĕн улăштармала туни çинчен колхозсем хушшинче сÿтсе-йавни те пулман. Çавăн пек йĕрке пÿрăна-киле колхозниксене пусуçавăрнăш çине вырăнвырăнăн çăмăллăн пăхма вĕрентнĕ. Хăшпĕр вырăнсенче çĕнĕ пусуçавăрнăш çине куçмалли таблицăсене те тĕрĕс мар туса панă. Акă, Трак районĕнче туса панă таблицăсем тăрăх, малтанхи çулсенче ыраш çине ыраш, çуртри

(Йулашки 4-мĕш страницăра).

Готвальд статйи

ПРАГА, октябрĕн 7-мĕш. „Руде право" тата „Роте фане" хаçатсем ĕнер Чехословакири коммунисла партин генеральнăй çекретарĕн Готвальд йулташăн „Тĕнчен шарламасăр тăма йурамаст" йатлă статйине пичетлесе кăларнă, унта Чехословакирен пиллĕкĕмĕш тăрăхри чылай районсене татса илесси çинчен „пĕтĕм тĕнчери" тесе калакан Берлинри комиççи çĕнĕ решени йышăнни çинчен çырнă.

Готвальд йулташ çапла çырат: „Годесбергри хăйен планне Гитлĕр Мŷнхенре, ытларах мар пулсан, йăлтах пурнăçа кĕртрĕ. Лондăнпа Париж Гитлĕре унтан ытларах пама та пултараймăн пек туйăнат. Анчах та Мŷнхĕнри пакт çине ала пуснă чернил типсе çитме те ĕлкĕреймерĕ, çак пакта Германи пăсрĕ те ĕнтĕ.

„Виççĕмĕш импери" Чехословакин шалти ĕçĕсене тŷрремĕнех хутшăнат. Хăраса ŷкнĕ Чехословакин Берлинран кăтартса панă тăрах хăвăртах фашисланмала, хăй никама пăхăнмасăр ирĕклĕн пурăнасине çухатса „Виççĕмĕш импери" çумĕнче политикăлă тата економикăлă татăк пулса тăмала. Çакă вăл—инçетри хăрушлăх мар, вăл пирĕ халех, кашни кун, кашни сехетре хăратса тăрат ĕнтĕ.

Чехословакинчи рабочи клас, пĕтĕм халăх наци тĕлĕшĕнчен та государствă тĕлĕшĕнчен никама пăхăнмасăр ирĕклĕн пуранассишĕн йăвăр кĕрешŷ туса пыраççĕ.

Вăхăт сахал йулчĕ. Тĕрĕссипе илсен кашни сехет хаклă. Епĕр мĕнпур çĕршывсенчи рабочи организацисенчен Чехословакине пĕтĕмпех чуралантарса лартассинчĕн çăлса хăварас тĕлĕшпе рабочи организацисен конференцине халех пухма сĕнсе ыйтатпăр".

Гитлĕр Чехословакин çĕнĕ районĕсене тытса илет

Мŷнхĕнре тунă килĕшŷве пурнăçа кĕртнине тĕрĕслесе тăракан пĕтĕм тĕнчери комиççи текенскер йышăннă тăрăх, Чехословакин плебисцит иртерме палăртнă районсем пурте, плебисцит иртермесĕрех, Германи аллине куçаççĕ.

Çак решени Чехословаки економикă йенчен те, çавăн пекех, хăй тĕллĕн республикă пулса тăрас йенĕпе те питĕ пысăк хăрушлăх умне илсе лырат. Гитлĕре çĕнĕрен тата пилĕк район параççĕ. Çав районсен шутне çĕркăмрăк промышлĕннăçĕн центрĕ (Çурçĕр Чехи), металлурги, сăра тăвакан тата пир-авăр промышлĕннăçĕсем кĕреççĕ. Çавăн пекех Прагă хулине електро-нерги парса тăракан тĕп електростанци тата çав районсенчи паллă чукунçулсем те Германи аллине куçаççĕ.

Чехословакин пичечĕ пĕлтернĕ тăрăх, Чехословаки представителĕсене пĕтĕм тĕнчери комиççи ларăвне кĕртмен те. Вĕсене маллан хатĕрлесе хунă решени текст не кăна панă. Çав решенине темиçе сехет хушшинче йышăнма ультиматлă срук кăтартса панă.

Çĕнĕ районсене Германи аллине парасси октябрĕн 7—10 мĕш хушшинче пулса иртмеле.

Фашисла Германи, хăйĕн Чехословакири агенчĕсем çине тайанса, Чехословакин шалти ĕçĕсене хутшăнассине тŷрремĕнех пурнăçа кĕртсе пырат. Октябрĕн пĕррремĕшĕнче Гитлĕр Бенеша президентран тухма хушнă. Октябрĕн 5-мĕшĕнче Бенеш президентран тухса хăйĕн ĕçĕсене тума пăрахнă.

Анчах Гитлĕр çаксемпе те лăплланса ларман. Октябрĕн 6-мĕшĕнче Венăри радио премйер-министра Сыровы генерала отставкăна тухма хушнă.

Фашисла Германи Чехословакире демократилĕ стройа пĕтерсе хурассишĕн тăрăшни пуриншĕн те паллă пулса тăчĕ.

(ТАСС).

Мотоциклсен чупăвĕ

Ижевскри спорт обшчĕстви „Учитель" Ижевск—Мускав маршрутпа мотоциклетсен чупăвне организацилене. Октябрĕн 3-мĕшĕнче моточупăвăн старчĕ пулнă.

Мотоциклсен чупăвĕнчи çынсем пурте хăйсен машинисемпе чупаççĕ. Чупăва—ленинла-сталинла комсомол 20 çул тултарнă йубилей йачĕпе организациленĕ.

Октябрĕн 7-мĕшĕнче моточупу участникĕсем Шупашкара çитрĕç. Шупашкарта каç выртнă тата чăвашсен столиципе паллашнă хыççăн, ĕнер вĕсем малала, Горький хулине тухса кайрĕç. Горькирен моточупу Владимир хули урлă Мускава кайат.

Чупу командорĕ В. П. Губин йулташ каланă тăрăх, чупу участникĕсем октябрĕн 12-мĕшĕнче Мускавра пулаççĕ. Хĕрлĕ столицăра темиçе кун хушши пурăннă хыççăн, мотоспортсменсем Мускав—Ижевск маршрутпа хăйсен тăван хулине таврăнаççĕ.

Шупашкар ĕççыннисем Ижевскри мотоциклетиссене хавхалăн кĕтсе илсе, малали çула ăнăçлăх сунса ăсатса йачĕç.

Ив. Кашасем

Платниксем кирлĕ

Çĕрпŷ районĕнчи електростанци строительствин ĕçĕсем вĕçне çитсе пыраççĕ. Електростанцине Октябĕр уйăвĕ тĕлне туса пĕтерсе станцăран 10—12 çухрăм айакра ларакан йалсене çутă кŷртмеле.

Хальхи вăхăтра строительствăн йулашки ĕçĕсене туса пĕтерме пуринчен ытла платниксем ытларах кирлĕ. Çапла пулин те йулашки кунсенче вĕсен йышĕ чакса пыни курăнат. Строительствăра ĕçлеме çирĕплетнĕ колхозсем ĕç вăйĕ çителĕклĕ памаççĕ. Акă, „Культмет" колхозран кашни кун 40—45 çын ĕçлемеле пулсан, 6—14 çын çеç ĕçлет.

Ан. Иванов.

Почтăпа çыхăну работникĕсен хăйсен ĕçне тĕпрен лайăхлатмала

Çыхăну ĕçĕ социализм строительствинче пысăк вырĕн йышăнса тăрат.

Редакцине килекен нумай çырусем вырăнти почтă уйрăмĕсемпе хăшпĕр почтальонсем государствă шанса панă ответлă ĕçе тивĕçлипе пурнăçа кĕртсе пыманнине кăтартса параççĕ. Уйрăмăнах хаçат-журнал сарас, вĕсене подписчиксем патне хăвăртрах çитерес, çырусене адрĕс тăрăх тĕрĕс çитерес ĕçре пысăк кăлтăксем пурри палăрат.

Ку тĕлĕшпе акă мĕнле тĕслĕхсем илсе кăтартма пулат.

„Супар почтă уйрăмĕнчи (Трак р.) пиçмоносĕц Е. Артемйĕв нумай çырусене çухатат йе вĕсене адрĕс тăрăх вăхăтра çитерсе памаст. Аслă Чуллăри „Прогресс" колхоз членĕ Терентйĕвă Степанидă патне хăйĕн ывăлĕ Хĕрлĕ Çартан çыру йанă. Вăл çырăва Терентйĕвă илсе вулайман. Ăна пиçмоносĕц тем сăлтавпа урăх çынна леççе панă. Лешĕ вара ку çырăва хăй патĕнчех тытса усранă. Артемйĕв хаçатсемпе çырусене çавнашкал çухатнисем татах та пулнă. Çавăн пек В. Васильĕвăн радиокомитета йанă 4 çырăвĕ çухалнă",—тесе çырат Ф. Гаврилăв корреспондент.

Ку мĕне пĕлтерет? Ку совет гражданĕсенчен мăшкăлланине пĕлтерет. Çырусене çухатни, вĕсене адрĕс тăрăх тĕрĕс те вăхăтра леççе паманни, кунсăр пуçне тата çырусене уçса вулани—саккуна пăсни пулат. Сталинла Конституцин 128-мĕш статйинче çапла каланă: „Гражданĕсен килçурчĕн тĕкĕнмелемарлăхне, хут-çырусен вăрттăнлăхне саккун сыхласа тăрат",—тенĕ.

Çакна почтă работникĕсен кашниннех çирĕппĕн асра тытса тăмала. Ку обйазăннăçа пĕр пăркаланмасăр тĕрĕс те хисеплĕн пурнăçа кĕртсе пымала. Çырусене уçса йе çухатса саккуна пăсакансене совет сучĕ умĕнче ответ тыттармала.

Хаçат-журнал пирĕн пурнăçра мĕн пек пысăк вырăн йышăнса тăнине кашниех лайăх ăнланат. Колхозлă йал, культурăлă совет гражданинĕ хаçат-журналсăр пурăнма пултараймаст. Почтă уйрăмĕн, пиçмоносĕцăн хаçатсене подписчиксем патне вăхăтра, тĕрĕс çитерсе тăмала. Çапах та хăшпĕр почтă уйрăмĕсемпе пиçмоносĕцсем, уйрăмăнах районсенчи пичет уйрăмĕсем хаçат сарассипе вĕсене подписчиксем патне çитерес ĕçе кирлĕ пек туса пымаççĕ-ха. Акă мĕн çырат Турханти почтă уйрăмĕ çинчен И. Архипăв корреспондент: „Турханти почтă уйрăмĕнчи хаçатсемпе ĕçлекен Самарин хаçат-журналсене почтă уйрăмĕсем тăрăх тĕрĕс валеççе памаст. Арапуçне йамали хаçат-журналсене Шетме йарат, Шетмĕне йамалисене Арапуçне йарса парат. Шетмĕри почтă уйрăмне „Красная Чувашья" хаçата 2 екземплйар, „Чăваш Коммунĕ" хаçата 3 екземплйар çитеlĕксĕр йарса тăрат. Çакă почтă уйрăмех адрĕслесе йанă 76 екземплйар районти „Коммунар" хаçат таçта çухалнă. Çавăн пекех Аслă Арапуçĕнчи почтă уйрăмĕ те йапăх ĕçлет. Кун çинчен районри хаçат урлă темиçе те асăрхаттарнă ĕнтĕ, анчах почтă уйрăмĕн начальникĕ Аврелкин ĕçе тŷрлетме шухăшламаст. Почтăра ĕçлекенсем хушшинче ĕç дисциплини çук. Работниксем ĕç вăхăтĕнчех почтăран тухса кайса усăсăр сулланса çŷреççĕ. Шетмĕ почтă уйрăмĕн начальникĕ Лазарĕв ерни ернипе ĕçкĕ-çикĕ тăрăх çŷрет".

Çакăн пекех Шăхасан районĕнче те пичет сойузĕ хаçат-журналсене подписчиксем патне вăхăтра çитерсе тăмаст. „Епĕ улта уйăхлăха „Рабкор" тата „Капкан" журналсем çырăнначчĕ. Унтанпа 4 уйăх иртрĕ пулин те журналсене пĕр номĕрне те алла илеймерĕм. Пичет сойузĕн пуçлăхĕ Йегорăв: „сирĕн журналсем декабĕр уйăхĕнче килме тытăнаççĕ" тесе лăплантарасшăн. Çакăн пекех почта уйрăмĕ йалсоветсене телефон лартса парасси çине те çаврăнса пăхмаст. Чуракасси тата Маŷшу йалсовечĕсем район центрĕнчен 10—15 километртра. Телефон çук пирки вĕсен пĕчĕк ĕççемшĕнех района пыма тивет",—тесе çырат Д. Иванов корреспондент.

Пирĕн республикăра примерлă ĕçлекен почтă уйрăмĕсемпе пиçмоносĕцсем пур. Акă, К. Михайлăв корреспондент çырат: „Çĕрпŷ районĕнче йулашки вăхăтра хаçат-журнал сарас ĕç вăйланчĕ. Районĕпе мĕн пурĕ 10 000 екземплйар тĕрлĕрен хаçат-журнал килсе тăрат. Хаçат сарас тĕлĕшпе тата вĕсене валеçес тĕлĕшпе районри пичет сойузĕн пуçлăхĕ Васильĕв йулташ тăрăшса ĕçлет. Вăл ку ыйтупа час-часах вырăнсене тухса çŷрет. Пиçмоносĕцсене пухса канашлусем туса иртерет. Почтă работникĕсене комсомолецсем те нумай пулăшаççĕ. Хаçат сарас тĕлĕшпе Еĕшкасси, Аслă Тукаль, Патăрйел тата Лĕпсерти почтă уйрăмĕсем малти вырăнта тăраççĕ. Кунсăр пуçне тата уйрăм примерлă пиçмоносĕцсене илсе кăтартма пулат. Акă: Тавăшкасси, Енĕшпуç тата Кăташ йалĕсенче çыру çŷретекен 60 çулхи Агафонăв ку ĕçре 1938 çултанпа ĕçлет. Вăл подписчиксем хушшинче ĕçе лайăх йĕркеленĕ, çырăнса илнĕ хаçатсене вăхăтра, тĕрĕс çитерсе тăрат. Патăрйелĕнчи Абашĕв пиçмоносĕц та кăтартулă ĕçлет. Вăл октябĕр уйăхĕшĕн мĕн пурĕ 505 екземплйар тĕрлĕрен хаçат сарнă".

Çакнашкал тăрăшса ĕçлекенсене кулленех палăртса ŷстерсе пымала. Анчах, хăшпĕр çĕрте почтă уйрăмĕсен начальникĕсем работниксем çине чунсăррăн пăхаççĕ. Кун çинчен Б. Иванов корреспондент çапла çырат: „Чатукасси почтă уйрăмĕнче ĕçлекен пиçмоносĕц М. Лукин почтă ĕçĕнче кăçал çеç ĕçлет пулин те хăйĕн участкинчи кашни килех хаçатлă турĕ. Çавăн пекех Именкассинчи Г. Мефодйĕв пиçмоносĕц та тăрăшса ĕçлет. Трак районĕнче лайăх ĕçлекен пиçмоносĕцсем татах та пур. Апла пулин те районри çыхăну пайĕн пуçлăхĕ Филиппăв вĕсем тăрăшса ĕçленине тивĕçлипе хакламаст. Лайăх ĕçлекенсен опытне палăртма тăрăшмаст".

Почтăпа çыхăну работникĕсем, халăх хуçалăхĕнчи ытти работниксем пекех, лайăх, ĕçе черерен йуратса ĕçлемеле. Халăх тăшманĕсем çыхăну ĕçĕнче туса хăварнă сăтăрсен йулашкийĕсене тĕпĕ-йĕрĕпех пĕтермеле.

Пирĕн физкультурниксен çитĕнĕвĕсем

Кăçалхи çу вăхăтĕнче Çĕмĕрле комбинатĕнчи физкультурниксем пысăк çĕнтерŷсем турĕç. Кăçал вĕсем виçĕ спартакиадăра пулса, начар мар вырăнсем йышăннă.

Июнь уйăхĕнче Йетĕрнере Сурски спартакиадă пулса иртрĕ. Ку спартакиадăра пирĕн коллективран 13 физкультурник пулнă, кунта вĕсем иккĕмĕш вырăна тухнă.

Сурски спартакиадăра пулнисенчен чи лайăх çитĕнŷсем Тыньаный, Балашовă, Сигута (пăшалпа тĕл пересипе), Родйакин йулташсем (кимĕпе хăвăрт ишессипе) тунă.

Августăн 3 мĕшĕнче Шупашкарта пулнă республикăри спартакиадăра комбинатри физкультурниксенчен 10 çын пулчĕç. Благовещенский физкультурник ку спартакиадăра гранатă ывăтассипе пĕрремĕш вырăн йышăннă. Хытă чупассипе Сигута йулташ рекорд турĕ, Балашовă йулташ вара хытă чупассипе спартакиадăра пĕрремĕш вырăна тухрĕ. Çŷлĕ сиксессипе Урукăв йулташ иккĕмĕш вырăн йышăнчĕ.

Августăн 30-мĕшĕнчен пуçласа çентабĕрĕн 5-мĕшĕччен мебĕл тата музыка тăвакан промышлĕннăçра ĕçлекен рабочисен Майкоп хулинче пулса иртнĕ пĕтĕм сойузри спартакиадинче пирĕн физкультурниксен коллективĕ тăваттăмĕш вырăна тухрĕ. Благовещенский йулташ ку спартакиадăра гранатă ывăтассипе пĕрремĕш вырăна йышăнчĕ. Çавăншăн ăна грамăта тата 100 тенкĕ укçа парса премиленĕ. Çŷлĕ сиксессипе иккĕмĕш вырăнсене Балашовă тата Петрунинă йулташсем йышăннă, вĕсене кашнине грамăтă панă. Футбол вăйăпе хăйсен пултарулăхне Урукăв, Николайĕв, Мирошниченко, Чирков тата Сутулин йулташсем кăтартрĕç. Пысăк дистанцине хытă чупассипе Алексейĕв йулташ хăйĕн пултарулăхне кăтартрĕ.

Иртнĕ çулла физкультурăпа спорт йенĕпе тунă çак çитĕнŷсем пирĕн коллектива савăнтараççĕ, вĕсемпе пирĕн комбинатри физкультурниксем тивĕçлĕн мухтанаççĕ. Вăл çитĕнŷсене пирĕн коллектив çирĕплетсе çĕнĕ çĕнтерŷсем тăвассишĕн пĕтĕм вăйа хурса ĕçлĕ.

М. Дорофейĕв.

Театр сезонĕ пуçланчĕ

Ĕнер, октябрĕн 8-мĕшĕнче, Н. Вирта çырнă „Земля" пйесăпа Чăваш Государства Академи театрĕн чăваш труппин хĕллехи сезонĕ уçăлчĕ. Пйесăна чăвашла Л. Агакăв куçарнă. Постановка режиссорĕ—Г. В. Морĕв.

Октябрĕн 10-мĕшĕнче Академи театрĕн вырăс труппи Грузи драматургĕ Г. Мдивани çырнă „Альказар" пйесă лартса парат. Постановка режиссорĕ—М. Бурмистрăв.

Ку пйесăна вырăс труппи октябрĕн 11-мĕшĕнче тата 12-мĕшĕнче те выляса парат.

Ответлă редактăр заместителĕ В. ЙАКĂВЛĔВ.

Чăваш крахмалтреста
крахмал савăтĕнче ĕçлеме
МЕХАНИК
тата трестра ĕçлеме
ИНЖЕНЕР-МЕХАНИК
васкавлă кирлĕ
Ĕç укçи килĕшŷ тăрăх.
Çак адрĕспе пĕлмелле: Чебоксары, Крахмалтрест.
3—0

1938 çулти
октябрĕн 9-мĕшпе 10-мĕшĕнче
ШУПАШКАРТИ КИНОТЕАТРТА
саслă, илемлĕ
„НОВЫЕ ВРЕМЕНА"
йатлă Америкă фильмĕ пырат.
Фильмра Чарли Чаплин выльат.

ВОДОПЙАНĂВ ЙАЧĔПЕ ТĂРАКАН ТИР-СĂРАН КОМБИНАТНЕ
бухгалтĕр, счетовод
ТАТА
план пайĕн начальникĕ
КИРЛĔ

Чăваш АССР Сывлăха сыхлав Халăх Комиссариатне
квалификацилĕ машинисткă
ТАТА
завхоз кирлĕ
2—0

Йалхуçалăх снабженин склачĕсенче
КОЛХОЗСЕНЕ СУТМАЛИ:
1. Çĕре çемçетмелли тĕрлĕрен имçамсем;
2) Йалхуçалăхĕнче сийенлекен тĕрлĕ хурт-кăпшанкăсене пĕтермелли химикатсем тата протравит тумали аппаратура;
3) Тĕрлĕрен вицелĕ кардолентăсем;
4) Çур тонилă, çĕр хут ŷстерекен, сысласем вицмелли, столовăй тарасисем—Шупашкарта;
5) Пĕр лашапа тата икĕ лашапа сухалламали плугсем, çŷресем, пĕр лаша тата икĕ лаша кŷлмели урапасем, улăм турамали машинăсем, 4 лашапа ĕçлемели молотилкăсем тата ытти йалхуçалăх машинисем те—Шупашкарта;
6) Тĕрлĕ суртлă тимĕр—Канашра. Октябĕр уйăхĕнче тимĕр йалхуçалăх снабженин пур склачĕсенче те пулат.
Çакăнта асăннă йапаласене мĕн чухлĕ кирлĕ—çавăн чухлĕ илме пулат.
Чăваш йалхуçалăх снабженин.
2—1

Пусуçаварнăш ĕçĕнче пулнă сăтăрлă ĕçсен йулашкийĕсене пĕтерес ыйту пирки

(Й У Л А Ш К И)

çине çуртри йе çĕртме уйне çуртри акмала туса панă.

Калас пулат, пусуçаварнăш ĕçĕнче пулнă сăтăрлă ĕçсен йулашкийĕсене пĕтерме, пĕтĕмĕшпе илсен, халь те кирлĕ пек тытăнса çитмен. Ку тĕлĕшпе Çĕрĕç Халăх Комиссариачĕ те, райçĕрĕç пайĕсем те пит йапăх ĕçлеççĕ.

Йетĕрне районĕнче пурĕ 90 колхозран 32 колхозра çийелтен пăхсан тĕрĕс пусуçаварнăшсем—7,8,9 уйлă пусуçаварнăшсем йышăннă пек. Анчах та, тĕрĕссипе илсен, пĕр колхозра та пусуçаварнăшсене тĕрĕс тытса пымаççĕ, тырпулсене пусуçаварнăш йĕрки тăрăх ылмаштарса акса пыни çук. Государствă актине панă чух 18 колхозăн уй чиккисем куçнипе пусуçаварнăшсем пăсăлнă пулнă. Вĕсене халь те йĕркелесе çитермен-ха. Ку районра 23 колхозра нимĕнле пусуçаварнăшсем те çук. Ку тарана çитиех çак ĕçе районра йертсе пыраканни никам та пулман. Çак вăл халиччене йулни сăтăрлă ĕçсен йулашкийĕ пулса тăрат ĕнтĕ.

Пирĕн пусуçаварнăшсем мĕнле пулмала

Сăтăрла ĕçсен йулашкийĕсене халех пĕтерсе, вăхăта вăрăма йамасăр кашни колхозăн тĕрĕс пусуçаварнăшсем çине куçса ĕçлеме тытăнмала. Мĕнле пусуçаварнăшĕ чи лайăхрах пуласси, паллах, колхозăн вырăнти условийĕсенчен килет. Çавна шута илмесĕр конкретлăн нимĕнле пусуçаварнăш те сĕнме çук, пĕтĕмĕшле сĕнŷ çеç пама пулат.

Тĕрĕс пусуçаварнăшĕ колхоза государствă умĕнчи обйазательствăсене тултарса пыма май паракан пулмала, колхоз тата колхозниксем валльи çителĕклĕ тыра тумалăх, выльăх апатне кирлĕ тăрăн туса илме майлă пулмала. Кунсăр пуçне тата пусуçаварнăшĕ тырпул тухăçне çуллен ŷстерсе пыма, йалхуçалăх ĕçĕсене механизацилеме (комбайнсемпе ĕçлеме уй ытлашши вак пулмала мар) май паракан пулмала.

Тĕрĕс пусуçаварнăшĕнче нумай çул ŷсекен курăксем вальли пĕрер уй хăварма тăрăшмала, клевĕр вăрлăхне тимофейĕвкăпа хутăш акса икĕ çул хушши çулса тăмала тумала. Çав вырăна çĕтвĕ хыççăн çуртрисем—йĕтĕнпе тулă акма кирлĕ.

Тĕрĕс пусуçаварăнăш йышăнас пулсан, пирĕн республикăри условире уйра тымарçимĕçсемпе пăрçалă культурăсене акма кирлине шута илмеле. Тымарçимĕçсем вĕсем пĕчĕк лаптăкранах органикăла чи нумай массă паракан культурăсем пулса тăраççĕ. Ку тарнччен пирĕн колхозсем унăн агротехникине вĕренсе çитеймени çав культурăсене пусуçаварнăшсене кĕртессине хирĕç калама сăлтав памаст.

Тепĕр культурă вăл—пăрçалă культурă. Пăрçалă культурăсем (пăрçа, йасмăк, чина) белок йенчен чи хаклă культурăсем пулса тăраççĕ, тепĕр йенчен тата клевĕр пекех (унтан кăшт çеç сахалтарах) çав культурăсен тымаррисĕм тăпрана азот йенчен пуйанлатса хăварса вĕсем хыççăн акăнакан культурăсен тухăçне ŷстерме пулăшаççĕ.

Йулашкинчен, тĕрĕс пусуçаварăнăшĕнче пĕр уй таса çĕртме, тепре—кĕрхи тырăсене акиччен урăх культурă акса илекен çĕртме пулмала. Хăшпĕр колхозсем çĕртме уйне викă акса ĕçлесшĕн мар, ыраш тухăçĕ чакат тесçĕ. Çав шухăш пĕртте тĕрĕс мар. Викăна малтарахран çулсан, вăл уйа кирлĕ пек çемçетсен, ыраш тухăçĕ пĕртте чакмаст. Ăна сăнав станцинчи опытсем те лайăх кăтартса параççĕ. Çĕртме уйне ку тараччен пирĕн викă çеç акса тунă. Хăшпĕр колхозсенчи опытсем кăтартнă тăрăх çĕртме уйне, ыраш акиччен малтан, пĕр хут çулма клевĕр акни йе ир пулса ĕлкĕрекен сурт çĕрулми (эпикур) лартса туни те пит усăллă.


Пусуçаварăнăшсем çинчен сŷтсе йавнă чух Йетĕрне районĕнчи колхозниксем кĕрхи тырăсен лаптăкне пĕчĕклетессине хирĕç калаçаççĕ. Вăл тĕрĕс. Тĕрĕс пусуçаварнăш çине куççан та кĕрхи тырăсен, тĕштырăсен лаптăкĕ пĕчĕкленес йулмала мар. Курăксен лаптăкĕ ŷсесси, пĕтĕмĕшпе илсен, халиччен усă курман çĕвĕ çĕр лаптăкĕ ŷсни урлă пулса пымала, çавăн пек тума нийепле те май килмен вырăнсенче çеç тĕштырăсен лаптăкĕ кăшт сахалланма пултарат. Çапла вара, сухаламали çĕр лаптăкне ŷстересси халь пысăк вырăнта тăракан задачă пулса тăрат.

Йетĕн акакан вырăнсенче клевĕр уйĕ пулмалах. Çавăн пекех, крахмал тата спирт савăчĕсем сывăхĕнчи колхозсенче пусуçаварнăшсене нумай çул ŷсекен курăксемсĕр пуçне 1—2 уй таран çĕрулми кĕртмеле.

Пусуçаварăнăш ыйтуне кашни районта, кашни колхозра тĕплĕн сŷтсе-йавса халех татса хумала. 1939 çултан пуçласа пĕр колхоз та тĕрĕс пусуçаварăнăш çине куçмасăр йулмала мар. Районсенчи агрономсен, çĕрйĕркелŷ ĕçĕпе ĕçлекенсен пурин те çак ĕçе хутшăнса йертсе пымала. Пусуçаварăнăшсене йĕркелесе çитернипе епĕр малашне тырпул тухăçне татах вăйлатса пыма çирĕп никĕс хуратпăр,—ку пĕр йенчен, тепĕр йенчен—çак ĕçре пулнă сăтăрлă ĕçсен йулашкийĕсене пĕтеретпĕр.

Н. Никитин.

КОЛХОЗСЕНЕ, СОВХОЗСЕНЕ,
Лашапа çŷрекен транспăрт организацисене,
КОЛХОЗНИКСЕМПЕ ЙЕДИНОЛИЧНИКСЕНЕ
ПĔЛСЕ ТĂМА
Çентабĕрĕн 15-мĕшĕнче
лашасен çилхисемпе хŷрисене
касмали вăхăт пуçланчĕ
ЛАША ÇИЛХИПЕ ХŶРИ
ПРОМЫШЛĔННĂÇПА ЕКСПĂРТШĂН
ХАКЛĂ ЧĔРТАВАР.
Лашасен çилхипе хŷрине касăр:
Касна çилхепе хŷре хĕлĕхне Сойуззаготкожа, потребительсен кооперацине (йалпо) тата Сойузутиля организацисене парăр.



„Чăваш Коммунĕ" [illegible]
Уполномоченный Чувашглавлита № 526
Гор. Чебоксары, типография № 1 [illegible] заказ № 703 [illegible]